Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ОКТЯБĔР 21 ЕРНЕКУН 243(5056) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 5—57, ред. замеçтителĕн—3—97, редакци çекретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйăн — 6—23.

Кайа йулнă парторганизацисене малта пыракан организацисем тума пулăшмала

Парторганизацисенче отчотпа суйлав пухăвĕсем пулнăранпа 5 уйăх иртрĕ. Çак вăхăт хушшинче ПСК(б)П Тĕпкомĕ тата Сталин йулташ хăй йертсе пынипе чăваш парторганизаци троцкиссене, бухаринĕцсене, буржуалă националиссене тата халăхăн ытти тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкас, вĕсен сăтарла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕ.

ПСК(б)П Чăваш облăç организацин XIX-мĕш конференцийĕ партин шалти пурнăçне тепĕр çĕнĕ, çӳлĕ пусăма хăпартрĕ. Конференци пĕтĕм чăваш парторганизацине халăх тăшманĕсене тĕпĕ-тымарĕпех кăклама, вĕсен сăтарла ĕçĕсен йулашкийĕсене хăвăртрах пĕтерме чĕнчĕ. Çав задачăна пурнăçа кĕртме пур парторганизацисенче те партилĕ-политикăлă ĕçсене тĕпренех вăйлатса йани кирлĕ.

Партилĕ-политикăлă ĕçри çитĕнӳсем вĕсем хăйсем тĕллĕн пулса пымаççĕ, вĕсене кĕрешсе илес пулать. Çакна тăвас тесен, кайа йулнă парторганизацисене пулăшса пырассине йĕркелени кирлĕ. ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ „Партин йертсе пыракан оргăнсен суйлавĕн итогĕсене май тумали хăшпĕр ĕçсем çинчен“ йышăннă постановленире йертсе пыракан оргăнсен ĕçĕсене çителĕксĕр тесе шутланă организацисене пулăшма хушать.

Парторгăнсен отчотпа суйлав пухăвĕсенче республикăра 99 пуçламĕш парторганизацисенче парткомсемпе парторгсен ĕçĕсене çителĕксĕр, тесе хак панă. Партком йе парторг ĕçне çителĕксĕр тесе шутланă пуçламĕш парторганизацисен отчотлă доклачĕсене райкомсемпе хула комитечĕсен бӳро ларăвĕсемпе пленумĕсенче итлемеле, вĕсене партилĕ-политикăлă ĕçсене лайăхлатса йарас тĕлĕшпе кирлĕ пек пулăшу памала, тесе ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ кăтартнине чылай парторганизацисем пурнăçа кĕртме тытăнманха. Ку Йĕпреç, Шăмăршă райкомĕсен ĕçĕсене ПСК(б)П обком бӳровĕнче пăхса тухнинчен те лайăх курăнать. Ку райкомсем коммуниссен отчотпа суйлав пухăвĕ йышăннă решенисене тата уйрăм коммуниссен сĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртессине ку таранччен кирлĕ пек хакламан. Йĕпреç районĕнче 5 пуçламĕш парторганизаци ĕçне çителĕксĕр тесе хак панă пулнă. Пайанхи куна пĕр пуçламĕш парторганизацин отчотне çеç итленĕ. Шăмăршă райкомĕ пĕр пуçламĕш парторганизаци отчотне те итлемен. ПСК(б)П Тĕпкомĕн решенине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕ те çак çӳлте кăтартнă райкомсенчен малах кайайман. Шупашкарти парторганизацинче отчотпа суйлав вăхăтĕнче 23 парткомпа парторг ĕçĕсене çителĕксĕр, тесе хак панă. Пайанхи куна хула комитечĕ пĕр пуçламĕш парторганизаци отчотне те тĕплĕн итлемен. Октябĕрĕн 8-мĕшĕнче Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци отчотне малтан хатĕрлемесĕр бӳрора лартса ыйтăва вĕçне çитермен.

Отчотлă докладсем итличчен малтан, отчот тăвакан парторганизаци ĕçне тĕплĕн тĕрĕслесе тухмала, райкомсен йе хула комитечĕн йертсе пыракан работникĕсен вырăнсене кайса парторганизаци ĕçĕпе тĕплĕн паллашмала, парторганизаци ĕçне тĕрĕслесе тухнă хыççăн çеç бӳрона лартмала. Çакна ăнланма вăхăт ĕнтĕ. Отчотсене уйрăм ыйтусем тăрăх мар, пĕтĕм ĕç çинчен итлес пулать. ПСК(б)П райкомĕсен, хула комитечĕн те пуçламĕш парторганизацисен отчочĕсене итленипе çак организацисенче пĕтĕм партилĕ-политикăлă тата хуçалăх ĕçĕсене вăйлатса йама пулăшас пулать.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ коммуниссен сĕнĕвĕсем çинчен йышăннă постановлени пысăк вырăнта тăмала. „Обкомсене, крайкомсене, нацилĕ компарти Тĕпкомĕсене, çавăн пекех тата парти райкомĕсемпе хула комитечĕсене те коммуниссем парти конференцисемпе партин отчотпа суйлав пухăвĕсенче тапратнă пур ыйтусемпе сĕнӳсене те пĕр уйăх хушшинче пăхса тухма хушас“ тенĕ ПСК(б)П Тĕпкомĕн постановленинче. Анчах чылай парторганизацисем коммуниссем тапратакан паха сĕнӳсене час-часах пурнăçа кĕртмесĕр тăраççĕ. Куна тăшмансен сăтарла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес, партилĕ-политикăлă ĕçсене лайăхлатас тĕлĕшпе коммуниссем сĕннине чылай парторганизацисем пурнăçа кĕртменни те лайăх кăтартса парать. Отчотпа суйлав пухăвĕ хыççăн Шăмăршă районĕнче 9 çынна çеç парти ретне илнĕ. Йĕпреç районĕнче те 22 çынна кăна парти ретне илнĕ. Ку райкомсем парти резервипе—комсомолĕцсемпе, сочувствуйушчисемпе, партире тăман активпа ĕçлессине ку таранччен тивĕçлипе йĕркелемен. Комсомол Йĕпреç райкомĕ комсомолĕцсене вĕрентсе çитĕнтерес ĕçе йапăхтарса йанă пирки чылай комсомолĕцсем йăла тĕлĕшĕнчен пăсăла пуçланă. Парти райкомĕ те ку ĕçрен пăрăнса тăнă.

Йединоличниксемпе ĕçлесси те питĕ йапăх пырать. ССР Сойуз Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеççийĕ „Уйрăм хуçалăхсен лашисем çине государствă налогĕ хурасси çинчен“ йышăннă саккуна йединоличниксене ăнлантарса парас ĕçе йĕркелемен пиркийех ĕнтĕ Йĕпреç, Шăмăршă районĕсенче коллективизаци ӳсмест. Йĕпреç районĕ пайанхи кун тĕлне те 58 процент çеç коллективизациленнĕ. Кунта райĕçтăвком председателĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ Тимофейĕв йулташ хăй те йединоличник, унăн çемйи те колхоза кĕмен. Паллах, çакăн пек çынсенчен коллективизаци ӳсĕмне хăпартассине кĕтме çук. Çавăнпа та ĕнтĕ Йĕпреç районĕ пур партилĕ-хуçалăх ĕçĕсенче те кайа йулса пырать. Акă мĕн патне илсе пырать коммуниссен сĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртменни.

Парторганизацисем умĕнче тăракан задачă вăл—чи кайа йулнă парторганизацисене те малта пыракан организаци тума пулăшасси пулать. Çакна тăвас тесен, кайа йулнă парторганизацисене партилĕ политикăла ĕçе йĕркелеме пулăшас пулать, вĕсен ĕçĕсемпе интереслĕнес пулать, руководителсене те ответлă пулма вĕрентни кирлĕ. Халĕ чăваш парторганизацин XIX-мĕш конференцийĕ йышăннă решенисене пурнăçа кĕртес май кашни парторганизацин ĕç планĕсем тумала. Пур парторгсем те ку плансене хăйсем тума пултараймаççĕ. Çавăнпа та райкомсен, хула комитечĕн те уйрăм парткомсемпе парторгсене плансем тума, тата ку плансене пурнăçа кĕртме пулăшни кирлĕ.

ПСК(б)П Тĕпком решенине пурнăçа кĕртес май вырăнти парторганизацисем çӳлти оргăнсем умĕнче отчот тăвассине сарса пымала. Отчотпа суйлав пухăвĕсем йышăннă решенисене пурнăçа кĕртиине болъшевикла тĕрĕслесе пырса, партилĕ-политикăлă тата хуçалăх ĕçĕсене малала тата ытларах вăйлатса пымала.

Героиньă-летчицăсем Мускава килме тухнă

Октябĕрĕн 19-мĕшĕнче Хабаровскри ĕçыннисем „Родина“ самолетăн паттăр екипажне ăсатнă. Вокзал умĕнчи плошчĕде хулари предприйатисемпе учреждениесен делегацийĕсем нумай пухăннă.

Мускав вăхăчĕпе 13 сехет те 30 минутра чаплă хăнасене ăсатнă йатпа митинг уçăлнă. Самолет екипажĕ йачĕпе Осипенко йулташ сăмах каланă.

Мускав вăхăчĕпе 14 сехетре героинйă-летчицăсене Мускава илсе килекен експресс Хабаровск вокзалĕнчен тухнă.

„Родина“ самолетăн паттăр екипажĕ тепĕр 8 кунран Мускава çитет.

(ТАСС).

—o—

Маринă Расковă йулташ каласа пани

ХАБАРОВСК, октябĕрĕн 18-мĕш (ТАСС). Паттăр летчицăсем—Гризодубăвă, Осипенко тата Расковă йулташсем Мускава килме тухас умĕн лайăх канаççĕ. Хабаровскри ĕççыннисем мухтавлă летчицăсене ăшă кăмăлпа тăрăшса пăхаççĕ.

Пайан летчицăсем Хабаровск гарнизонĕнчи чăссен пысăк митингĕнче пулчĕç. Бойецсем, командирсем, политработниксем тата начальствă составĕн çемйисем штурмăн Маринă Расковă йулташăн тĕлĕнмеле чаплă сăмахĕсене çав тери пысăк тимлĕхпе итленĕ.

Маринă Расковă йулташ хăйсем тӳссе иртернĕ йăвăрлăхсем çинчен каласа панă хушăрах, кулăшла тата витĕмлĕ сăмахсемпе каласа, хăйĕн каласăвне кашни çын чĕрине хумхантармала туса хурать.

—Пирĕн самолет анса ларнă вырăна чи пирвай парашӳтпа сиксе аннă капитан Полежайĕв йулташа чаплă сăмахсем каласа кĕтсе илме хатĕрленсе тăтăмăр епĕр. Çав чаплă сăмахсем вырăнне акă мĕн пулса тухрĕ: Полежайĕв капитан çĕр çине анса çитсенех, ун патне чи пирвай капитан Полинă Осипенко чупса пычĕ. Нимĕнле чаплă сăмахсем те каласси пулмарĕ. Икĕ капитан пĕр-пĕрин патне чупса пырса, пĕр-пĕрне чуптурĕç те, макăрма тытăнчĕç, вĕсем иккĕшĕ те, çав тăвансем пĕрне-пĕри нумай вăхăт хушши курмасăр пурăннă хыççăн тĕл пулсан макăрнă пекех макăрчĕç.

Расковă йулташ хыççăн Сахăрăв летчик, лейтенант Катулин тата ытти йулташсем тухса каласнă.

Унтан „Родина“ самолет вĕçевĕ тĕлĕшпе ĕçлекен Правителствă Комиççийĕпе каласма летчицăсем телеграфа кайнă.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмала): „Родина“ самолетăн иккĕмĕш пилочĕ капитан орденоносĕц П. Д. Осипенко, екипаж командирĕ ССРС Верховнăй Совет депутачĕ орденоносĕц В. С. Гризодубăвă, „Родина“ самолет штурмăнĕ аслă лейтенант-орденоносĕц М.М. Расковă.

А. Межуйĕвпа Б. Фишман фото-ӳкерчĕкĕ („Пресс-клише“).

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн тата Шалти ĕççен Халăх Комиссариачĕн Çарĕсен командирĕсемпе красноармейĕцĕсене ССРС орденĕсемпе наградăланă

ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн октябĕрĕн 19-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх, Совет Сойузĕн оборонă хăватне çирĕплетес йенĕпе правителствă йатарласа панă заданисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Шалти ĕççен Халăх Комиссариачĕн Çарĕсен сойединенийĕсенче, подразделенийĕсенче тата чăçĕсенче çар ĕçĕн техникипе политикăна вĕренес çĕрте калама çук паллă ĕçсем тунăшăн командирсене, политработниксене, инженерсене, техниксене тата красноармейĕцсене—пурĕ 355 çынна ССР Сойузĕн орденĕсемпе наградăланă. Ленин орденĕ 9 çынна, Хĕрлĕ Йалав орденĕ— 44 çынна, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ—72 çынна, «За отвагу» медалĕ—62 çынна тата «За боевые заслуги» медалĕ—168 çынна панă.

(ТАСС).

Хасан кӳлли патĕнчи çапăçусенче пулнă Ахтонăв йулташ хăй çуралнă йалта хăнара

Хасан кӳлли районĕнчи çапăçусенче пулнă комиссар Ахтонăв йулташ Тетĕш районĕнчи (Тутар АССР) Лĕашĕвă йалне хăй ашшĕ патне хăнана пынă. Августăн 2-мĕшĕнчи çапăçура Ахтонăв йулташ аманнă пулнă, вара пĕр уйăх ытла госпитальре выртса иртернĕ.

Хăйсен йал çыннине колхозниксем чунтан савăнса саламланă. Вĕсем ыйтнă тăрăх Ахтонăв йулташ Хасан кӳлли патĕнче самурайсене аркатса тăкни çинчен каласа панă.

— Колхозник йулташсем,—тенĕ вăл,—вунсакăр çул хушши ĕнтĕ епĕ Хĕрлĕ Çар воинĕн чаплă йатне мухтавлăн йатса çӳретĕп, анчах ман чунăм августăн иккĕмĕшĕнчи пек хавхаланса çĕкленни нихăçан та пулманччĕ. Бойецсем, командирсем тата политработниксем кам хăйуларах та паттăртарах пулĕ тесе ăмăртса çапăçрĕç. Хасан кӳлли патĕнче пирĕн çĕр çине каçса кĕни Йапони военшчинишĕн пит хакла ларчĕ. Таса Совет çĕрĕн пĕр пусăмĕ те захватчиксене лекмерĕ...

Ахтонăв йулташпа калаçнă çĕрте йалти пур колхозниксем те пулнă.

(ТАСС).

Коммунис хăй тĕллĕн вĕренни

№—151 (Красный луч) шахтăра кăмрăк касакан машинă машинисĕ коммунис Лука Иванăвич Середа çултаlăк кайарах, Ленинпа Сталин произведенийĕсене вĕренме тытăннă, вĕренӳ пуçламĕшĕнче вăл шикленсе тăнă. Середа йулташ, пĕлӳлĕх çителĕксĕр пулнă май, вăл кĕнекесен ăсне алла илеймĕп, тесе хăранă. Анчах çапла иккĕленни кăлăхах пулнă. Сталин йулташ Американ рабочисен пĕрремĕш делегацийĕпе калаçнине вуласа тухса, Середа йулташ тĕп положенисене çырса илнĕ, кайран вара хăй вуласа тухнине, çав çырса хунисем тăрăх, пĕрле ĕçлекен йулташĕсене каласа панă.

Начар мар тухнă. Вăл хăйĕн вăйне шанма пуçланă. Середа йулташ, кĕнеке тăрăх хăйне уйрăмăн вĕренсе пысăк çитĕнӳсем тума пулнине ăнланса илнĕ. Вăл тăтăшах пилĕккунлăхра 7—8 сехет хушши Ленин—Сталин произведенийĕсене вĕренме пуçланă. Вăл вуланă, уйрăм вырăнсене çыра-çыра илнĕ, парткабинетра консультаци илсе тăнă.

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (болъшевиксен) Партин историйĕ пичетленсе тухсан, Середа йулташ марксисла-ленинла теорине вĕренес ĕçпе тата ытларах интереслĕнме пуçланă.

Учебникĕн малтанхи икĕ сыпăкне вĕренсе тухнийех Середа йулташăн пĕлӳлĕхне нумай пуйанлатнă, вăл парти историне ăслăлăхла-марксисла ăнланса илме пулăшнă.

— ПСК(б)П историне вĕренсе,—тесе каласа парать Середа йулташ, учебник марксисла идейăсемпе мĕн тери пуйан иккенне ытларан ытларах ăнланса пыратăп, болъшевикла парти историне йепле пулсан та таранрахăн, пур йенчен те пĕлес килет.

Середа коммунисăн примерне кура шахтă парткомĕ партилĕ пропагандăна сарас ĕç çине çĕнĕле пăхма пуçланă. Партком ытларах хатĕрленнĕ коммуниссене ПСК(б)П историне хăйсем тĕллĕн вĕрентес ĕçе организацилет.

(ТАСС).

Ленинла-сталинла комсомол XX çул тултарнă тĕле

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: В. Алексейĕв—Рабочи Çамрăксен Социалисла Сойузĕн Петербург комитечĕн пирвайхи председателĕ (1898 çулти декабĕрте çуралнă, 1919 çулти декабĕрте вилнĕ).

(Сойузфото).

Китайри вăрçă

Йапонĕцсем, пысăк тăкаксем туса, Кăнтăр Китайра наступлени туса пыраççĕ. Вĕсем Вейчжоуна (Биас заливĕнчен çурçĕр йенче) туртса илнĕ. Уншăн çапăçса виçĕ пин йапонĕц вилнĕ. Октябĕрĕн 18-мĕшĕнче Боло хули çинеле (Вейчжоуран кăнтăр-хĕвеланăç йенче) наступлени тума пуçланă. Боло икĕ хутчен аларан алла куçнă, вара калама çук пысăк çухатусем туса ăна йапонĕцсем туртса илнĕ. Хула йăлтах ишĕлсе пĕтнĕ.

Вăл района Китайăн çĕнĕ вăйĕсем пыраççĕ.

Сватоупа Гонконг хушшинче çурма çулта йапонĕцсем çĕнĕ десант антарса хăварнă.

Центр Китайра, хайар çапăçусем хыççăн, вăйлăн бомбăсем пăрахса тăнă хыççăн, йапонĕцсем Синчикоуна (Цзӳцзйанран хĕвеланăç йенче, Сингочжоу районĕнче) туртса илнĕ.

Китай çарĕсем оборонăн çĕнĕ линийĕ çине куçнă.

Наньчан—Деань шоççе çулĕ çинче (Деане туртса илес шутпа йапонĕцсем унта хăйсен резервисене илсе пынă), çавăн пекех Ханькоуран çурçĕр йенче Синьйан районĕнче хайар çапăçусем пыраççĕ.

Махулин станци районĕнче йулашки кунсенче йапонĕцсем темиçе хутчен те наступлени пуçлама хăтланса пăхнă, анчах вĕсен ĕçĕ ăнăçман.

Çурçĕр Китайра, Хебей провинцинче каллех пысăк çапăçусем сарăлса кайнă. Йапонĕцсем китайĕцсене хĕвелтухăç Хебейран хĕссе кăларма хăтланаççĕ, анчах вĕсен ĕçĕ пĕрре те ăнăçмасть.

(ТАСС).

Еçе йама хатĕрлесе çитерне çĕнĕ стройкăсем тăрăх агитацилĕ вĕçев

Мускавран М. Горький йачĕпе тăракан агитескадрильйăн пилĕк самолетлă отрйачĕ агитацилĕ пысăк вĕçеве тухнă. Вăл отрйад апат-çимĕç промышлĕннăçĕн ĕçе йама хатĕрлесе çитерне çĕнĕ стройкисенче пулать. Самолетсем çинче—Мускаври стаханăвĕц-строителсем тата инженерсем. Вĕсем хăйсемпе пĕрле лайăхлатса çитернĕ чи çĕнĕ инструментсем илнĕ (çав инсрументсем пулăшнипе вĕсем производствăлă рекордсем тунă), вырăнтан вырăна куçса çӳрекен строителствă выставки тата „Мускаври стаханăвĕц-строителсем“ йатлă техникăлă филъм илнĕ.

Самолетсем Калугăра, Кийĕвра, Дон-çи Ростовра, Новосибирскра, Нальчикра, Ворошилăвградра, Куйбышĕвра, Горькинче пулаççĕ. Агитрейса хутшăннă çынсем çав пур хуласенче те строителсемпе тата инженерлă-техниклă работниксемпе инструктаж иртереççĕ. Хăйсен Мускаври стройкăсенчи опычĕсемпе паллаштараççĕ, вырăнти стаханăвĕцсене кирпĕч купалас ĕçри, штукатурă тăвас ĕçри, столярсемпе платниксен ĕçĕнчи чи çĕнĕ медăтсемпе ĕçлеме вĕрентеççĕ.

Маршрут вăрăмăшĕ—5000 километр. Агитрейс пĕр уйăха пымала.

(ТАСС).

Комсомол комитечĕн çĕнĕ составне çамрăк интеллигент-комсомолĕцсене суйланă

Йарославль чукунçулĕн пĕрремĕшпе иккĕмĕш дистанцири комсомол организаци ĕçĕсем çинчен комитет çекретарĕ Лисицин йулташ тунă доклад тăрăх комсомолĕцсем пысăк тимлĕхпе тухса каласнă.

—Лисицин йулташ хăйĕн докладĕнче,—тенĕ комсомолкă Мурашкинă йулташ,—пĕр питĕ те кирлĕ ыйту çинчен каламарĕ. Пирĕн организацинче çамрăк интеллигент-комсомолĕцсем нумай ĕçлеççĕ, вĕсем хăйсене куллен пулăшса пыма ыйтаççĕ. Çак çамрăк интеллигентсен пурнăçĕпе, вĕсен ыйтăвĕсемпе пирĕн комитет пачах интересленмен, çакна епĕ пысăк çитменлĕх, тесе шутлатăп.

Комсомолĕцсем хăйсен сăмахĕсенче çамрăксем хушшинче оборонă ĕçне вăйлатма, çавăн пекех, комсомолра тăман çамрăксемпе ĕçлессине лайăхлатма хушнă.

Вăрттăн сасăласа комитет членĕсене советăн çамрăк интеллигенчĕсене-техниксене Мурашкинă, Перешвикин, Потанăвă, механик Йунатăв, електромонтор Лисицин йулташсене суйласа хăварнă.

Комитет çекретарне пионер вожатăйĕ пулса ĕçленĕ çамрăк комсомолкăна—Мурашкинă йалташа суйланă.

(ТАСС).

„За отвагу“ тата „За боевые заслуги“ медальсем çинчен çырса кăтартни

„За отвагу“ медаль тĕрĕс çаврашка формилĕ, çаврашка диаметрĕ 37 миллиметр. Медаль çиййĕ (икĕ йенĕ те) йăлтăркка çутă. Медальăн пичийĕнĕн çӳлти пайĕ çинче—пĕр-пĕрин хыççăн вĕçсе пыракан виçĕ самолет кĕлетки ӳкерсе хунă. Вĕсен айне „За отвагу“ тесе çырнă. Çав сăмахсем айне танк кĕлетки туса хунă, унтан айаларахра „СССР“ тесе çырнă.

„За боевые заслуги“ медаль тĕрĕс çаврашка формилĕ, çаврашка диаметрĕ 31 миллиметр. Медаль çиййĕ (икĕ йенĕ те) йăлтăркка çутă. Медаль пичийĕне çинче, çаврашкан çӳлти хĕрринче „СССР“ тесе çырса хунă. Пичийĕнĕн варринче—„За боевые заслуги“ сăмахсем çырса хунă. Вăл сăмахсенчен айаларахра пĕр-пĕрин çине хĕреслетсе хунă винтовкăпа шашкă кĕлеткисем туса хунă.

„За отвагу“ тата „За боевые заслуги“ медальсене кĕмĕлрен тунă.

ПСК(б)П Вăрнар райкомĕн пленумĕ

Октябĕрĕн 15-мĕшĕнче ПСК(б)П Вăрнар райкомĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум уйрăм хуçалăхсен лашисем çине хунă налога пухасси çинчен доклад итлесе сӳтсе йаврĕ.

Ку ĕç районра çителĕксĕр пынине палартса, пленум парти активне йалсене пулăшма йамала турĕ.

Д. Обофорăв.

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (боļшевиксен) Партин

ИСТОРИЙĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ редакциленĕ. **КĔСКЕ КУРС.** *ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.*

IV СЫПĂК

МЕНЬШЕВИКСЕМПЕ БОЛЬШЕВИКСЕМ СТОЛЫПИН РЕАКЦИЙĔ ТАПХĂРĔНЧЕ. БОЛЬШЕВИКСЕМ МАРКСИСЛА ХĂЙНЕ УЙРĂМ ПАРТИНЕ ЙĔРКЕЛЕННИ

(1908—1912 ÇУЛСЕМ).

1. Столыпин реакцийĕ. Интеллигенцин оппозицилĕ сийĕсем пăсăлса кайни. Упадочничĕствă. Партири интеллигенцин пĕр пайĕ марксисăм тăшманĕсен лагĕрне куçни тата марксисăм теорине ревизи тума хăтланни. Ленин хăйĕн „Материализм и эмпириокритицизм“ йатлă кĕнекинче ревизиониссене çĕмĕрсе тăкни тата марксисла партин теорилĕ никĕсĕсене хӳтĕлени.

II Государственнăй думăна патша правительстви 1907 çулти ийунĕн 3-мĕшĕнче салатса йанă. Çав куна историре ийунĕн виççĕмĕшĕнчи государственнăй переворот кунĕ, теççĕ. Патша правительстви III Государственнăй думăна суйласси çинчен çĕнĕ саккун кăларнă, çапла вара вăл 1905 çулти октăбĕрĕн 17-мĕшĕнче кăларнă хăйĕн манифестне пăснă, мĕншĕн тесен, çав манифест тăрăх, вăл çĕнĕ саккунсене думă килĕшнипе çеç кăларма пултарнă. Иккĕмĕш думăри социал-демократла фракцине суда панă, рабочи клас представителĕсене катăргăна тата ссылкăна йанă.

Çĕнĕ суйлав саккунĕ тăрăх думăра помещиксен тата суту-илӳ промышлĕннăç буржуази представителĕсен хисепĕ нумай ӳснĕ. Çав вăхăтрах хресченсемпе рабочисен ахаļ те нумай мар пулнă представителĕсен хисепĕ темиçе хут сахалланнă.

III думă хăйĕн составĕпе черносотĕнла-кадетла думă пулнă. Мĕнпур 442 депутатран унта: сылтăммисем (черносотĕнĕцсем) 171, октăбриссем тата вĕсене çывăх тăракан группăсен членĕсем—113, кадетсем тата вĕсене çывăх тăракан группăсен членĕсем—101, трудовиксем—13, социал-демократсем—18 пулнă.

Сылтăммисем (вĕсене думăра сылтăм йенче ларнă пирки çапла каланă) хресченсемпе рабочисен чи хайар тăшманĕсем—черносотĕнла помещик-крепостниксем пулнă. Вĕсем хресченсен йухăмне пусарнă вăхăтра хресченсене массăлăн ватса-хĕнесе тата персе вĕлерекенсем, йеврейсем хушшинче погром тăвассине, демонстрацисем тăвакан рабочисене хĕнесе пĕтерессине, революци кунĕсенче митингсем пынă çуртсене тискеррĕн вут тĕртсе çунтарассине организацилекенсем пулнă. Сылтăммисем ĕççынниснсене чи тискер майсемпе пусарса лартассишĕн, патшан нимĕнпе те пӳлсе чарман влаçĕшĕн, патшан 1905 çулта октăбĕрĕн 17-мĕшĕнче кăларнă манифесне хирĕç тăнă.

Думăра сылтăммисене октăбриссен партийĕ, йе „Союз 17-го октября“ текен парти çывăх тăнă. Октăбриссем шултăра промышлĕннăçлă капиталăн тата капиталисла хуçалăх тытса тăракан шултăра помещиксен интересĕсене палăртса тăнă (1905 çулти революци пуçламĕшĕнче октăбриссем йенне шултăра помещиксем пулса тăракан кадетсен чылай пысăк пайĕ куçнă). Октăбриссене сылтăммисенчен—октăбĕрĕн 17-мĕшĕнчи манифеса йышăнни кăна ăна та пулин сăмахпа çеç йышăнни уйăрса тăнă. Октăбриссем пĕтĕмпех патша правительствин шалти тата тулти политики майлă тăнă.

Кадетсен, йе „конституцилĕ-демократилĕ“ партин, III думăра вырăнсем I тата II думăринчен сахалтарах пулнă. Ку вăл помещиксен сасĕсен пĕр пайĕ кадетсенчен октăбриссен йенне куçнă пирки пулнă.

III думăра трудовиксем текен вакбуржуалă демократсен пĕчĕк группи пулнă. Трудовиксем думăра кадетсемпе рабочи демократи (большевиксем) хушшинче пăркаланса тăнă. Ленин трудовиксем думăра питĕ вăйсăр пулсан та, вĕсем массăсен, хресчен массисен представителĕсем пулса тăраççĕ, тесе кăтартса панă. Трудовиксем кадетсемпе рабочи демократи хушшинче пăркаланса тăрасси вак хуçасен кăсла лару-тăрăвне йула пурпĕрех пулмала пулнă. Ленин депутат-большевиксен умне, рабочи демократи умне „вакбуржуалă вăйсăр демократсене пулăшас, вĕсене либералсен влийанинчен туртса кăларас, демократи лагĕрне сылтăммисене хирĕç кăна мар, контрреволюцилĕ кадетсене хирĕç те пĕтĕçтерес...“ задача кăларса тăратнă (Ленин, т. XV, стр. 486).

1905 çулти революци пынă вăхăтра та, пуринчен ытла вăл парăннă хыççăн, кадетсем хăйсем контрреволюцилĕ вăй пулнине ытларах та ытларах кăтартнă. Вĕсем хăйсем çинчен „демократла“ маскăна ытларах та ытларах сӳсе пăрахса, чăн-чăн монархиссем, патша йĕркине сыхлакансем пулса пынă. 1909 çулта кадетсен паллă писателĕсен группи „Вехи“ йатлă сборник пичетлесе кăларнă, çав сборникре кадетсем революцине пусарса лартнăшăн буржуази йачĕпе патша влаçне тав тунă. Чăпăркка тата çакса вĕлермелисем çиçче тытăнса тăракан патша правительстви умĕнче упаленсе унăн ури тĕпне çуласа, кадетсем тӳрех çапла çырнă: „ку влаçа пиллес пулать, пĕр вăл çеç пире (урăхла каласан, либераļнăй буржуазине) халăх штыкĕсемпе тата тĕрмисемпе халăх çиллинчен сыхласа тăрать-ха“.

II Государственнăй думăна саласа йанă хыççăн тата Государственнăй думăн социал-демократла фракци членĕсене суд туса катăргăна йанă хыççăн, патша правительстви пролетариатăн политикăлă тата економикăлă организацийĕсене вăйлăн çĕмĕрме тытăннă. Катăргă тĕрмисене, крепăçсене тата ссылкă вырăнĕсене революционерсене лартса тултарнă. Революционерсене тĕрмесенче тискеррĕн хĕненĕ, асаплантарнă тата хĕнхур кăтартнă. Черносотĕнла террор пур çĕрте те алхасса кайнă. Патша министрĕ Столыпин пĕтĕм çĕршыва çакса вĕлермелисемпе витсе хунă. Темиçе пин революционера çакса вĕлернĕ. Çакса вĕлермелисене унчухне „Столыпин галстукĕ“ тесе йат панă.

Рабочисемпе хресченсен революцилĕ йухăмне пусарса пырса, патша правительстви революционерсене хĕсĕрленипе, карательнăй експедицисемпе, персе вĕлернисемпе, тĕрмесемпе, катăргăпа кăна чарăнса тăма пултарайман. Хресченсем „аттемĕр-патшана“ сахал та пулин ĕненсе тăрасси пĕтсех те пĕтсех пынине патша правительстви хăраса курнă. Çавăнпа та вăл пысăк маневр туса илнĕ, вăл йалти буржуазин нумай йышлă класĕнчен—кулаксенчен хăйĕн йалти çирĕп тĕрекне туса хума шухăшланă.

1906 çулти нойабĕрĕн 9-мĕшĕнче Столыпин çĕр çинчен çĕнĕ саккун хресченсене общчинăран хутăрсене уйăрса кăлармали саккун кăларнă. Столыпин кăларнă çĕр саккунĕ тăрăх çĕре общчинăпа тытса тăрас йĕрке çĕмĕрĕлнĕ. Кашни хресчене хăйĕн йат çĕрне хăйĕн аллине илме, общчинăран уйăрălса тухма хушнă. Хресчен хăйĕн йат çĕрне сутма пултарнă, çакна тума унăн ĕлĕк права пулман. Общчинăран тухакан хресченсене общчĕствăн çĕре пĕр вырăнта (хутăр, отруб) касса памала пулнă.

Пуйан хресченсене—кулаксене çавăн чухне чухăнрах пурăнакан хресченсен çĕрĕсене йӳнĕ хакпа илме май туса панă. Çав саккуна кăларнă хыççăн темиçе çултан чухăнрах пурăнакан пĕр миллион ытла хресченсем пачах çĕрсĕр тăрса йулнă тата йухăнса пĕтнĕ. Чухăнрах пурăнакан хресченсене çĕрсĕр тăратса хăварнин шучĕпе кулаксен хутăрĕсемпе отрубсен хисепĕ ӳснĕ. Хăш чухне çав хутăрсемпе отрубсем чăн-чăн помещик хуçалăхĕсем пекех пулнă, унта батраксем пит нумай тара кĕрĕшсе ĕçленĕ. Правительствă хресченсене общчинăран кулаксене-хуторйансене валеçи чи лайăх çĕрсене касса партарнă.

Хресченсене „ирĕке кăларнă“ чухне помещиксем хресченсен çĕрĕсене çаратнă пулсан, халĕ ĕнтĕ кулаксем общчинă çĕрĕсене çарата пуçланă, чи лайăх çĕрсене касса илнĕ, чухăнсен йат çĕрĕсене йӳнĕ хакпа туйаннă.

Патша правительстви кулаксене çĕрсем илме тата хутăрсем тума чылайăх пысăк ссудă парса тăнă. Столыпин кулаксенчен патша йĕркине тĕрĕссĕн сыхласа тăракан пĕчĕк помещиксем тăвасшăн пулнă.

Тăхăр çул хушшинче (1906 çултан пуçласа 1915 çула çитиччен) общчинăран пурĕ икĕ миллион ытла хуçалăх уйăрălса тухнă.

Столыпиншчинă сахал çĕрлĕ хресченсен тата йалти чухăнсен пурнăçне тата та ытларах начарлатнă. Хресченсем сийленесси вăйланнă. Хресченсем кулак-хуторйансемпе çапăçма пуçланă.

Çавăнпа пĕрлех хресченсем патша правительстви тата помещикла-кадетла Государственнăй думă пур чухне помещиксен çĕрĕсене илме май çук иккенне ăнланма пуçланă.

Хутăрсене уйăрălса тухасси вăйланнă çулсенче (1907—1909) хресченсен йухăмĕ малтан чакса пынă, анчах часах, 1910—1911 çулсенче тата унран кайран та, общчинăра пурăнакансемпе хутăрта пурăнакан кулаксем хушшинче пулнă çапăçусене пула, хресченсен помещиксемпе кулаксене-хуторйансене хирĕçле йухăмĕ вăйланса пырать.

Промышлĕннăçра та революци хыççăн çавăн пекех пысăк улшăнусем пулса иртнĕ. Промышлĕннăç концентрацийĕ, урăхла каласан, промышлĕннăçа ытларах та ытларах капиталисла пысăк группăсен аллине пухса пĕтĕçтересси тата шултăралатасси, чылайах вăйланнă. Çĕршыв ăшĕнче таварсен хакне ӳстерес, илнĕ усламран ытлашшине вара експăрта вăйлатмали фонд тăвас тесе тата тулашри рынăксене йӳнĕ хакпа таварсем кăларса, тулашри рынăксене хăйсен аллине çавăрса илме май пултăр тесе, капиталиссем 1905 çулти революцичченех те ĕнтĕ сойузсене пĕрлеше пуçланă. Капиталиссен çавăн пек сойузĕсене, çавăн пек пĕрлешĕвĕсене (монополисене) трестсем тата çиндикатсем тенĕ. Революци хыççăн буржуалă трестсемпе çиндикатсен хисепĕ тата та ытларах ӳснĕ. Çавăн пекех шултăра банксен хисепĕ те нумайланса пынă тата вĕсен ролĕ те промышлĕннăçра ӳссе пынă. Российăна йут çĕршывран капиталиссем килесси ӳссе пынă.

Çапла ĕнтĕ, Российăра капиталисăм ытларах та ытларах монополисăмла, империалисăмла капиталисăм пулса пынă.

Темиçе çул чарăнса тăнă хыççăн промышлĕннăç çĕнĕрен чĕрĕлсе кайнă: кăмрăк кăларасси, металл туса кăларасси, нефть кăларасси ӳснĕ, пусма-таварсем тата сахăр туса кăларасси те ӳснĕ. Йут çĕршывсене тырпул сутас ĕç вăйлăн ӳснĕ.

Çав вăхăтра Российă хăйĕн промышлĕннăçне кăшт малала йанă пулсан та, вăл хĕвеланăç Йевропăпа танлаштарсан кайа йулнă çĕршывах пулса йулнă тата йут çĕршыв капиталисĕсене пăхăнса тăнă. Российăра машинăсемпе станоксен производстви пулман—вĕсене йут çĕршывсенчен илсе килнĕ. Çавăн пекех тата автомобил промышлĕннăçĕ те пулман, хими промышлĕннăçĕ те, çĕре çемçетмели минераллă удобренисем тăвакан промышлĕннăç та пулман. Хĕçпăшалсем тăвас ĕçре те Российă капиталисăмла ытти çĕршывсенчен йулса пынă.

Российăра металлпа сахал усă курни вăл—Российă кайа йулнине кăтартса парать, тесе палăртса, Ленин çапла çырнă:

„Хресченсене ирĕке кăларнă хыççăн çур ĕмĕр тăршшĕнче Российăра тимĕрпе усă курасси пилĕк хут ӳсрĕ, анчах çапах та Российă çав тери тата халиччен пулманла кайа йулнă, чухăн тата çурма дикарла çĕршыв пулса йулать, производствăра кучунехи орудисемпе ĕçлес тĕлĕшпе вăл Англирен тăватă хут начартарах, Германирен пилĕк хут начартарах, Америкăран вунă хут начартарах“ (Ленин, т. XVI, стр. 543).

Российă хуçалăхпа политикă тĕлĕшĕнчен кайа йулни—вырăс капиталисăмĕ те, çавăн пекех патша йĕрки хăй те хĕвеланăç Йевропă капиталисăмне пăхăнса тăрасси патне илсе пынă.

Ку çакăнтан курăнса тăнă: халăх хуçалăхĕн чи кирлĕ отраçлисем—çĕр кăмрăкĕ, нефть, електропромышлĕннăç, металлурги йут çĕршыв капиталĕн аллинче пулнă, машинăсене пурне те, тата оборудованисене пурне те тенĕ пекех патша Российĕн йут çĕршывсенчен кӳрсе килмеле пулнă.

Ку çакăнтан курăнса тăнă: патша Российĕ йут çĕршывсенчен пит йăвăр условисемпе займсем илнĕ, çав займсем тăрăх процентсем тӳлеме патша правительстви халăхран çулсеренех темиçе çĕр-шер миллион тенкĕ укçа шăйăрса илнĕ.

Ку çакăнтан курăнса тăнă: патша Российĕ „сойузниксемпе“ вăрттăн догăвăрсем тунă, çав догăвăрсем тăрăх патша правительстви вăрçă пулас пулсан, „сойузниксене“ пулăшас тата Англипе Франци капиталисĕсене çав тери пысăк усламсем илсе тăма май парас тесе империалисла фронтсене вырăс салтакĕсене миллионшар çын кăларса тăратма обиазательствă панă.

Столыпин реакцийĕн çулĕсем уйрăмăнах çакăнпа палăрса тăнă: çав çулсенче жандармсемпе полицейскисем, патша провокатăрĕсемпе черносотĕнла пуçкасакансем рабочи клас çине вăрă-хурахла тапăнса пынă. Анчах рабочи класа патша опричникĕсем çеç мар хĕсĕрленĕ. Ку тĕлĕшпе фабрикантсемпе савăт хуçисем те вĕсенчен йулса пыман, промышлĕннăç ĕçлемесĕр тăнă çулсенче тата ĕççĕрлĕх ӳснĕ çулсенче вĕсем рабочи клас çине тапăнса пырассине уйрăмăнах вăйлатнă. Фабрикантсем рабочисене массăлăн ĕçрен кăлара-кăлара йанă (локаут тунă), „хура кĕнекесем“ тунă, вăл кĕнекесем çине забастовкăсене активлăн хутшăннă ăнланулă рабочисене çырса пынă. Çав „хура кĕнекесем“, йе „хура списăксем“ çине лекнĕ рабочисене промышлĕннăçăн çав отраçлĕри фабрикантсен сойузне кĕрекен предприйатисенче пĕринче те ĕçе илмен. Расценкăсене 1908 çултах ĕнтĕ 10—15 процент чакарнă пулнă. Ĕçкунне пур вырăнсенче те 10—12 сехет таран вăрăмлатнă. Рабочисене çаратмали штрафсен системи çĕнĕрен алхасса кайнă.

1905 çулти революци парăннине пула революци попутчикĕсен речĕсем саланса тата пăсăлса кайма пуçланă. Пăсăлса кайасси тата упадочничествă уйрăмăнах интеллигенци хушшинче вăйланнă. Революци тăвăллăн çĕкленсе пынă вăхăтра буржуалă сийсем хушшинчен революци ретне килнĕ попутчиксем реакци кунĕсенче партирен пăрăнса кайнă. Вĕсенчен пĕр пайĕ революцине хирĕç уççăнах кĕрешекен тăшмансен лагĕрне кайнă, пĕр пайĕ рабочи класăн сыхланса йулнă легаļнăй общчĕствисене кĕрсе ларнă та пролетариата революцилĕ çул çинчен пăрса йама, пролетариатăн революцилĕ партине массă умĕнче шанчăксăра кăларма тăрăшнă. Революцирен кайала чакса, попутчиксем реакци çумне çыпăçма, патша йĕркипе килĕштерсе пурăнма тăрăшнă.

Патша правительстви революци парăннипе революци попутчикĕсем хушшинчи хăравçăрах тата хăйсен тирĕсене ытларах сыхлама тăрăшакан етемсене хăйĕн агĕнчĕсем—провокатăрсем тăвас ĕçре усă курнă.

Патша охранки рабочисен организацийĕсене тата парти организацийĕсене йарса тултарнă ирсĕр иудă-провокатăрсем шалтан шпионла ĕçсем тунă тата революционерсене охранкă аллине тыта-тыта панă.

Контрреволюци наступленийĕ идеологи фронтĕнче те пулса пынă. Кĕтӳвĕпех модăлă писателĕсем сиксе тухнă, вĕсем марксисăма „критиклесе“ „йатланă“, революци çине сурса вăрçнă, унтан мăшкăланă, предательствăна мухтанă, „культ личности“ ӳтĕмĕпе арлă аскăнчăклăха мухтанă.

Философи тĕлĕшпе марксисăма „критиклеме“ хăтланасси, ăна ревизи тума хăтланасси вăйланнă, çавăн пекех тата тĕн тĕлĕшпе тĕрлĕ йухăмсем пуçланса кайнă, вăл йухăмсем „наукăлă“ имĕш сăлтавсемпе витĕнсе тăнă.

Марксисăма „критиклесси“ модă пулса тăнă.

Çав господасен, вĕсем тĕрлĕ тĕслĕ пулнине пăхмасăр, пурин те пĕр ĕмĕт—массăсене революцирен пăрса йарас ĕмĕт пулнă.

Упадочничествă тата шанчăксăрлăх çавăн пекех партири интеллигентсен пĕр пайĕ хушшинче те хăйсене марксис тесе шутланă, анчах та марксисăм позицийĕсем çинче нихăçан та çирĕп тăман етемсем хушшинче те пулнă. Вĕсем хушшинче çак писательсем пулнă: Богданăв, Базарăв, Луначарский (вĕсем 1905 çулта большевиксемпе çывхарнă), Йушкевич, Валентинăв (меньшевиксем). Вĕсем пĕр вăхăтрах марксисăмăн философилĕ-теорилĕ никĕсĕсене хирĕç те, урăхла каласан, диалектикăлă материалисăма хирĕç, тата унăн наукăлă-историлĕ никĕсĕсене хирĕç те, урăхла каласан, историлĕ материалисăма хирĕç, „критикă“ сарса йанă. Çав критикă ахаļ чухнехи критикăран çакăнпа уйăрălса тăнă: вăл уççăн та тӳрĕ кăмăллăн мар, марксисăмăн тĕп позицийĕсене „хӳтĕлес“ флагпа витĕнсе, ултавлăн та пытанчăклăн пулса пынă. Епĕр, тенĕ вĕсем, тĕпрен илсен марксиссем, анчах та марксисăма „лайăхлатасшăн“, ăна хăшпĕр тĕп положенисенчен хăтарасшăн пулăттăмăр. Чăннипе илсен вĕсем марксисăмăн тăшманĕсем пулнă, мĕншĕн тесен, вĕсем сăмахпа хăйсем марксисăмăн тăшманĕсем пулнине йышăнман пулин те тата хăйсене марксиссем тесе икĕпитленсе каланă пулин те, марксисăмăн теорилĕ никĕсĕсене пăсма тăрăшнă. Çавăн пек икĕпитлĕ критикăн хăрушлăхĕ çакăнта пулнă: вăл партин рйадовой работникĕсене улталас шутпа пулса пынă, вĕсене тĕрĕс çул çинчен пăрса йама пултарнă. Марксисăмăн теорилĕ никĕсĕсене аркатас шутпа пулса пынă çав критикă мĕн чухлĕ икĕпитлĕрех пулнă, вăл партишĕн çавăн чухлĕ хăрушăрах пулнă, мĕншĕн тесен вăл партине хирĕç, революцине хирĕç пыракан реакцин пĕтĕм похочĕпе çавăн чухлĕ таччăнрах пĕрлешнĕ. Марксисăмран пăрăнса кайнă интеллигентсен пĕр пайĕ (вĕсене „богоискатели“ тата „богостроители“ тенĕ) çĕнĕ тĕн тума кирлĕ тесе вĕрентесси патнех çитнĕ.

Марксиссем умĕнче вăраха йамала мар задачă—марксисăм теорийĕ тĕлĕшĕнчен çав пăсăлса кайнă етемсене тивĕçлипе питлес, вĕсем çинчен маскăна сӳсе пăрахас, вĕсене вĕçне çитиччен тăрă шыв çине кăларас, çапла майпа, марксисла партин теорилĕ никĕсĕсене сыхласа хăварас задачă тăнă.

Çав задача пурнăçа кĕртес ĕçе хăйсене хăйсем „марксисăмăн паллă теоретикĕсем“ тесе шутлакан Плехановпа унăн меньшевикла тусĕсем тытăнĕç, тесе шутлама май пулнă. Анчах вĕсем паллах мар пĕр-икĕ фельйетонла-критикăлă статйасем çыркаланă та тĕмсем хыçне кайса ларнă.

Çав задача Ленин хăйĕн „Материализм и эмпириокритицизм“ йатлă чаплă кĕнекинче пурнăçа кĕртнĕ, вăл кĕнеке 1909 çулта тухнă.

„Çур çултан та кайарах вăхăт хушшинче, тесе çырнă Ленин çав кĕнекере, пуринчен ытла тата пĕтĕмпе тенĕ пекех диалектикăлă материалисăм çине тапăнассине çутатса çырнă тăватă кĕнеке тухрĕ. Кунта чи малтан „Очерки по (? кунта: философине хирĕç, тесе каламалаччĕ) философии марксизма“, СПБ, 1908, Базарăв, Богданăв, Луначарский, Берман, Гельфонд, Йушкевич, Суворăв статйисен сборникĕ; унтан: Йушкевичăн—„Материализм и критический реализм“, Берманăн—„Диалектика в свете современной теории познания“, Валентинăвăн—„Философские построения марксизма“ йатлă кĕнекисем... Çак етемсем пурте вĕсен политикăлă шухăшĕсем пĕр пек мар пулин те—диалектикăлă материалисăма хирĕç тăшманла пулнипе пĕрлешнĕскерсем, çав вăхăтрах хăйсене философире марксиссем теме хăтланаççĕ! Енгельсăн диалектики вăл „мистикă“ пулать, —тет Берман, Енгельсăн шухăшĕсем „кивелнĕ“, тесе, вăл çапла пулмала пекех туса, тĕртсе хурать сăмах майĕн, Базарăв, материалисăма пирĕн хăйулă воинсем: „познанийĕн кучухнехи теорийĕ“ çине, „чи çĕнĕ философи“ (йе „чи çĕнĕ позитивизм“) çине, „кучухнехи йестествознани философийĕ“ çине йе тата „XX ĕмĕрти йестествознани философийĕ“ çине те мăнкăмăллăн кăтартакан воинсем ӳпĕнтерсе пăрахнă пулать“ (Ленин, т. XIII, стр. 11).

Хăйĕн „тусĕсене — философири ревизиониссене тӳрре кăлармa тăрăшса: „тен епĕр çухалса çӳретпĕр пулĕ, анчах шыратпăр“ тесе каланă Луначарскине ответлесе, Ленин çапла çырнă:

„Мана илес пулсан, епĕ те çавăн пекех — философире „шыракан çын“. Шăпах ĕнтĕ: çак заметкăсенче (кунта сăмах „Материализм и эмпириокритицизм“ кĕнеке çинчен пырать. — Ред.) епĕ хам умма: марксисăм ӳтĕмĕпе çав тери пăтранчăк, тĕллипаллисĕр тата реакцилĕ вĕрентӳ саракан етемсем мĕнре çухалса кайнине шыраса тупас задача лартрăм“ (çавăнтах, стр. 12.)

Анчах та, чăннипе илсен, Ленинăн кĕнеки çав пысăк мар задачăн рамкинчен тухса нумай иртсе кайнă. Чăннипе Ленин кĕнеки Богданăва, Йушкевича, Базарăва, Валентинăва тата вĕсене философине вĕрентекен учителĕсене, — Авенариуспа Маха, хăйсен произведенийĕсенче марксисла материалисăм вырăнне — чейен йакатса çепĕçлетнĕ идеалисăм сарма хăтланаканскерсене, критиклени çеç мар пулать. Ленин кĕнеки çавăнпа пĕрлех, марксисăмăн теорилĕ никĕсĕсене—диалектикăлă тата историлĕ материалисăма хӳтĕлени пулать. Вăл пĕр пĕтĕм историлĕ тапхăр хушшинче, Енгельс вилнĕ вăхăтран пуçласа Ленинăн „Материализм и эмпириокритицизм“ йатлă кĕнеки тухнă тапхăр хушшинче наукă тата, пуринчен малтан, йестествознани туйаннă вĕрентĕвĕн мĕнпур паха та кирлĕ йенĕсене материалисăмла пĕтĕçтерсе пани пулса тăрать.

Вырăс емпириокритикĕсене тата вĕсен йут çĕршыври учителĕсене тивĕçлипе критиклесе тăкса, философилĕ-теорилĕ ревизионисăма хирĕç Ленин хăйĕн кĕнекинче çакăн пек вывăдсем тăвать:

1) „Марксисăма ытларах та ытларах чейе майсемпе ултавлăн пăсса пыни, ытларах та ытларах чейеленсе материалисăма хирĕçле вĕрентӳсене марксисăм йеверлĕ туни, — акă мĕнпе палăрса тăрать ĕнтĕ кучухнехи ревизионисăм политикăлă економире те, тактикă ыйтăвĕсенче те, пĕтĕмĕшпе философире те“ (çавăнтах, стр. 270);

2) „Махпа Авенариусăн пĕтĕм шкулĕ идеалисăм патне пырать“ (çавăнтах, стр. 291);

3) „Пирĕн махиссем пурте идеалисăм ăшне путса ларнă“ (çавăнтах, стр. 282);

4) „Емпириокритицисăмăн гносеологилĕ схоластики хыçĕнче партисен философири кĕрешӳне, йулашки шутран кучухнехи общчĕствăн тăшманла класĕсен туртăмĕпе идеологине палăртса тăракан кĕрешӳве курмасăр тăма çук“ (çавăнтах, стр. 292);

5) „Емпириокритицисăмăн обйективлă, класлă ролĕ вăл—фидеиссене (тĕне наукăран мала хуракан реакционерсене. — Ред.), вĕсен историлĕ материалисăма хирĕç пыракан кĕрешĕвĕнче, пĕтĕмпех тарçăла пулăшас роль пулса тăрать“ (çавăнтах, стр. 292);

6) „Философилĕ идеалисăм вăл... поповшчинă патне илсе кайакан çул“ (çавăнтах, стр. 304).

Ленин кĕнеки пирĕн парти историнче çав тери пысăк вырăн йышăнса тăнине хаклас тесен тата Столыпин реакцийĕн тапхăрĕнчи мĕнпур тата пур тĕрлĕ ревизиониссемпе перерожденĕцсене хирĕç кĕрешсе пырса Ленин мĕнле пысăк та паха теорилĕ пуйанлăх сыхласа хăварнине ăнланса илес тесен—диалектикăлă тата историлĕ материалисăмăн никĕсĕсемпе, кĕскен пулин те, паллашни кирлĕ.

Ку пуринчен ытла çавăнпа кирлĕ: диалектикăлă тата историлĕ материалисăмсем — вĕсем коммунисăмăн теорилĕ никĕсĕ, марксисла партин теорилĕ никĕсĕсем пулса тăраççĕ, çав никĕссене пĕлни вара, апла пулсан, вĕсене ăнланса пĕлсе çитесси пирĕн партире активлă ĕçлекенĕн кашнин обйазаннăçĕ пулса тăрать.

Çапла вара:

1) Мĕн вăл диалектикăлă материалисăм?

2) Мĕн вăл историлĕ материалисăм?

(ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн малалли „Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн çитес номĕрĕсенче пичетленет).

Парти пурнăçĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕнче

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ Йĕпреç, Шăмăршă райкомĕсем ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ „Партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕн итогĕсене май тумали хăшпĕр ĕçсем çинчен“ йышăннă постановленине мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен сӳтсе йавнă.

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ Йĕпреç, Шăмăршă райкомĕсем ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ йышăннă решенине пурнăçа кĕртес йенĕпе пачах çителĕксĕр ĕçленине палăртнă. Йĕпреç районĕнче отчотпа суйлав пухăвĕсенче 5 пуçламĕш парторганизаци ĕçне çителĕксĕр тесе хак пана пулнă. ПСК(б)П райкомĕ ку таранччен пĕр пуçламĕш парторганизаци отчотне çеç итленĕ. Шăмăршă райкомĕ пĕр пуçламĕш парторганизаци отчотне те итлемен. Ку районсем коммуниссем отчотпа суйлав пухăвĕсенче панă сĕнӳсене пурнăçа кĕртмеççĕ.

Йĕпреç, Шăмăршă райкомĕсене тата вĕсен пĕрремĕш çекретарĕсене—Михайлăв, Сивкин йулташсене отчотпа суйлав пухăвĕсенче ĕçне çителĕксĕр тесе хак панă пуçламĕш парторганизацисен отчочĕсене, ПСК(б)П Тĕпкомĕ кăтартнă срукра райком заседанийĕсенче итлеме хушнă.

ПСК(б)П райкомĕсен, хула комитечĕн заседанийĕсенче пуçламĕш парторганизацисен отчочĕсене итленĕ вăхăтра отчотпа суйлав пухăвĕсенче сĕнӳсем панă коммуниссене чĕнме сĕнет ПСК(б)П Обкомĕ.

ПСК(б)П райкомĕсене, хула комитетне отчотпа суйлав пухăвĕсенче панă коммуниссен сĕнĕвĕсене 10 кун хушшинче пăхса тухса, вĕсене пурнăçа кĕртме кирлĕ мерăсем йышăнма хушнă.

ПСК(б)П райкомĕсене тата хула комитетне вунă кун хушшинче парти аппарачĕсене çирĕплетме хушнă. Çавăн пекех райкомсен тата хула комитечĕн штатра тăман инструктăрĕсене 5—10 çын таран суйласа илсе çирĕплетме хушнă.

ПСК(б)П Обкомĕн йертсе пыракан парторгăнсен пайне, ПСК(б)П хула комитетне тата райкомсене инструктăрсене, пуçламĕш парторганизацисене, пĕчченкоммуниссене йертсе пырассине вăйлатса йама хушнă.

Республикăри тата районри хаçатсене, райком инструктăрĕсем, пуçламĕш парторганизацисем ПСК(б)П Тĕпкомĕн тата Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш партконференци йышăннă решенисене пурнăçа кĕртес ĕçри опытсене тăтăшах çутатса пыма хушнă.

ПСК(б)П Обком бӳровĕ Йĕпреç, Шăмăршă райкомĕсене ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1938 çулти августăн 22-мĕшĕнчи постановленине çителĕксĕр пурнăçа кĕртсе пынине асăрхаттарса, вĕсене çӳлте кăтартнă çитменлĕхсене пĕтерме, малашне партилĕ-политикăлă тата хуçалăх ĕçĕсене лайăхлатса йама хушнă.

Парти вĕрентĕвĕн тĕп çуртĕнче

Парти вĕрентĕвĕн тĕп çурчĕ пропагандиссене тата ПСК(б)П историн Кĕске курсне вĕренекенсене пулăшма тĕрлĕ ĕçсем туса пырать.

Çитес кунсенче Шупашкар хулинчи пропагандиссен çеминарĕ ĕçлеме тытăнать, пурĕ 2 группă пулать.

Октăберпе нойабĕр уйăхĕсенче парти истори ыйтăвĕсемпе лекцисем пулса иртеççĕ (пурĕ 7 лекци тата группăлă консуљтаци 5 пулмала).

Октăберĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа, кĕнекепе харпăрхăй тĕллĕн ĕçлесси çинчен занђатисем пулаççĕ.

Хулари ПСК(б)П историне вĕренекен интеллигенци валђи октăберĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа уйрăм лекцисем пулса иртеççĕ. Октăберĕн 22-мĕшĕнче хулари врачсем валђи пĕрремĕш лекци пулать.

Парти вĕрентĕвĕн тĕп çуртĕнче ПСК(б)П историн Кĕске курсĕн I-мĕшпе II-мĕш сыпăкĕсене вĕреннĕ чух кирлĕ пулакан материалсен выставкине организациленĕ. Унта Ленин тата Сталин документчĕсем, фото-ӳкерчĕксем, диаграммăсем, политикăлă тата илемлĕ литературă пур.

Халђхи вăхăтра парти вĕрентĕвĕн тĕп çурчĕ пропагандиссен 4 уйăхлăх курсне ирттерме хатĕрленет. Курсра 75 çын пулмала.

Лукинский.

—О—

XIX-мĕш партконференци решенисене сӳтсе-йаваççĕ

ЙĔПРЕÇ. Октăберĕн 14-мĕшĕнче коммуниссен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху Чăваш парторганизацин облăçри XIX-мĕш конференци ĕçĕсем çинчен тата 1939 çулти халăх переписне хатĕрленесси çинчен сӳтсе-йаврĕ.

Пренире 27 коммунис тухса каларĕç. Тухса каланă йулташсем тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес ĕç районра пит те вăраха тăсăлса пынине палăртрĕç. Ку вăл уйрăмах строительства ĕçĕнче палăрать. Районри клуб çуртне тума пуçлани çулталăк çитет, анчах пайанхи куна çуррине кăна тунă. Ăна та тепĕр хут пăсса çĕнĕрен тума тивет. Мĕншĕн тесен клубăн никĕсĕ йурăхсăр, çĕрнĕ. Строительства техникĕ Постлăв йулташ строительства ĕçне пăрахса курорта тухса шăваннă.

Суту-илӳ организацисем те сăтăрла ĕçсен йулашкисемпе кĕрешес тĕлĕшпе йапăх ĕçлеççĕ. Чылай лавкасенче темиçе хутчен сутпа айăпланнă çынсем, растратчиксем, жуликсем, кулак ывăлĕ-хĕрĕсем „ĕçлеççĕ“. Раймагра ĕçлекен Степанăвă 500 тенкĕ ытла растратă тунă пулсан та райсойуз пуçлăхĕ Воронков ăна ĕçе илнĕ. Вăл халĕ тата 1000 тенкĕ ытла растратă тунă. Çавăн пекех Чăваш Тимеш йалповĕнче Кураков—йаланах лавкана çаратакансксер тата Карушкинă—кулак хĕрĕ „ĕçлеççĕ“.

Ĕççыннисене куллен кирлĕ таварсене вăхăтра кӳрсе килмеççĕ. Лавкасенче уйăх ытла ĕнтĕ спичкă çук, çăкăрпа та тăтăшах сут тумаççĕ. Пусма-таварсене районри базарах, райсойузра ĕçлекенсене, вĕсен тăванĕсене салатса пĕтереççĕ.

Пухура тухса каланă йулташсем районра партилĕ-политикăлă ĕç çителĕксĕр пыни çинчен те каларĕç. ПСК(б)П райкомĕ отчотпа суйлав пухăвĕсенче коммуниссем тапратнă пур ыйтусемпе сĕнӳсене те пурнăçа кĕртнине тĕрĕслессине организацилемен. Отчотпа суйлав пухăвĕсенче уполнаркомзаг, райĕçтăвком, Епеçри пуçламĕш парторганизаци ĕçĕсене çителĕксĕр тесе хак панă, анчах ПСК(б)П райкомĕ ку пуçламĕш парторганизацисен парторгĕсен отчочĕсене итлемен. Райком çекретарĕсем, çавăн пекех инструктăрĕсем те, пуçламĕш парторганизацисенче парти ыйтăвĕсемпе питĕ сахал пулни çинчен те каларĕç пухура.

Парти ретне çĕнĕ членсем илесси тата çĕнĕрен илнисем хушшинче, çавăн пекех сочувствуйушчисем хушшинче ĕçлесси районра çителĕксĕр. Парти ретне çĕнĕрен 62 çынна çеç илнĕ. Буинскри сланец рудникĕнчи, „Кооплеспром“ аласталăх ертелĕнчи т. ыт. пуçламĕш парторганизацисенче парти ретне çĕнĕрен пĕр çынна та илмен.

Пуху Чăваш парторганизацин XIX-мĕш конференци ĕçĕсене ырласа, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене кĕске вăхăтра пĕтерме, партилĕ-политикăлă ĕçе вăйлатма решени йышăнчĕ.

Ф. Захарăв.

ОКТĂБЕР УЙĂВĔ УМĔНХИ ĂМĂРТУ

Стаханăвĕçсен хисепĕ ӳсрĕ

Вăрманкассинчи (Сĕнтĕрвăрри р.) „Куљтурă“ колхоз кăçалхи йалхуçалăх ĕçĕсене туса пĕтерчĕ. Колхозри пур ĕçре те колхозниксемпе колхозницăсем тăрăшса, ăмăртса ĕçлерĕç. Çураки вăхăтĕнче пирĕн колхозра чи лайăх стаханăвĕçсем 13 çын пулнă пулсан, халђ вĕсем—32 çын. Пирĕн „Куљтурă“ колхоз Октăбер уйавне çитĕнӳсемпе кĕтсе илес тесе Илменкассинчи „Çиçĕм“ колхозпа ăмăртăва тухрĕ. Епĕр уйава хатĕрленнĕ май, çитес çулти вăйлă тырпулшăн кĕрешетпĕр. Иртнĕ çулсенче епĕр çĕре çемçетмели торфа йалтан 8 километртан турттарнă пулсан, халђ йал çывăхĕнчех икĕ вырăн шыраса тупрăмăр. Малтан шутласа пăхнă тăрăх, икĕ вырăнта 150 пин лав торф пур. Бригадăсем 1216 лав торф уйа турттарса кăларса кĕрхи çĕртме сухи айне туса хăварчĕç. Колхоз Октăбер уйавĕ умĕн тата 10 пин лав кăларса хатĕрлессишĕн кĕрешет.

Епĕр выљăхсен ăратлăхне лайăхлатса, вĕсенчен ытларах тупăш илессишĕн тăрăшса ĕçлетпĕр. Колхозăн сĕт-çу ферми пур. Фермă выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели государства планне тултарнă. Çавнашкалах фермă йенĕпе государствăна 1938 çулшăн аш-какай, сĕт-çу парса татнă. Выљăхсене хĕл каçарма тĕплĕн хатĕрленсе пыратпăр.

Кăçал колхозниксем пысăк тупăш илеççĕ. Халђ 8 колхозник хуçалăхĕ çĕнĕрен пӳрт лартрĕç. Çак кунсенче колхоза 9 хуçалăх хутшăнчĕç.

Колхоз председателĕ—
С. Журављов.

—О—

Çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илеççĕ

ВĂРНАР. Социалисăмлă Аслă революци 21 çул тултарнă уйава ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн районри колхозсенче ăмăрту сарăлсах пырать.

Иермошкăри Калинин йачĕпе тăракан, Мăн Елменти „Трактăр“, Булатăвăри Молăтăв йачĕпе тăракан тата Малтикасри „Пĕрлешӳ“ колхозсем кăçалхи йалхуçалăх ĕçĕсене лайăх вĕçлерĕç.

Йалхуçалăх ĕçĕсене ăнăçулăн вĕçлессишĕн Калинин йачĕпе тăракан колхозпа „Трактăр“ колхозсем пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç.

Булатăвăри Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз та Октăбер уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, çитес çулхи вăйлă турпулшăн кĕрешӳ пуçарса йачĕ. Халĕ колхозра çĕре çемçетмели вырăнти йапалаçене хатĕрлес тĕлĕшпе те чылай ĕçсем туса ирттернĕ. Кĕрхи çĕртме сухи айне 3407 лав йушкăн, 4541 лав торф кăларнă. Çавăн пекех вăрлăх фончĕсене уйăрса, суртласа тасатма тытăннă. Колхозниксем хушшинче стаханăвла йухăма анлăн сарса йанă. Торф кăларас çĕрте А. Машанăв кулленхи ĕç нормине 215 процент тултарса ĕçлерĕ. Вăрлăх суртланă çĕрте А. Архипăвă, Тихăнăвă, А. Шапăшăвă колхозницăсем кулленхи нормăна 200—250 процент тултарса пыраççĕ.

А. Крислов.

Пысăк çĕкленӳ

ЙĔПРЕÇ. Районри предприйатисенче, йалсоветсемпе колхозсенче, вăрман участкисенче Октăбер уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăрту сарăлсах пырать. „Кооплеспром“ аласталăх ертелĕн струшкă туса кăларакан савăтра, сĕтел-пукан, катка-пичке туса кăларакан цехсенче ĕçлекенсем Октăбер уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă хыççăн тухăçлăн ĕçлеме пуçларĕç. Рабочисемпе инженерлă-техниклă работниксем производства планне Октăбер уйавĕ тĕлне ытлашшипех тата пысăк пахалăхпа тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Акă, струшкă туса кăларакан цехри станочницă Анна Йефремăвă ăмăртăва тухнă хыççăн кашни кунхи ĕç нормине 120—127 процент тултарса пыма пуçларĕ. Катка-пичке туса хатĕрлекен цех çулталăкри плана 129 процент тултарчĕ, халђ Октăбер уйавĕ тĕлне 140 процент тултарассишĕн кĕрешет. Сĕтел-пукансем туса кăларакан цехри Андрей Федоçейĕв нормăна 110—120 процент тултарса пыма пуçларĕ.

Машинă - трактăрлă станцинчи трактăриссем те Октăбер уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă хыççăн ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Ăмăртура пĕрремĕш стаханăвла бригадă (бригадирĕ Йакăвлĕв) малта пырать. Çак бригадă трактăрсемпе ĕçлес плана 152 процент тултарнă. Бригадăри трактăриссем Октăбер уйавне çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илес майпа пушшех те хастарлăн ĕçлеме тытăнчĕç. Хиркинпа Ваçилйĕв трактăриссем кашни кунхи нормăна 150—160 процент тултараççĕ.

Çавăн пекех 5-мĕш бригадăри Воробйов трактăрис та уйава çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешет. Воробйов „ЧТЗ“ трактăрпа сменăра 14 гектар сухаласа, нормăна 115 процент тултарса пырать.

Малта пыракан колхозсемпе бригадăсем те Октăбер уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, государства умĕнчи обйазательствăсене срукчен тултарассишĕн, йалхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлессишĕн кĕрешеççĕ. „Çиçĕм“ колхозри колхозниксем ăмăртăва хутшăнса государства умĕнчи обйазательствăсене тултарчĕç.

Кĕлĕмкассинчи „Хĕрлĕ фронтовик“ колхозра Октăбер уйавне хатĕрленнĕ май колхоз йухăмне ӳстерессипе йединоличниксем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе анлăн сарса йанă. Çакăн хыççăн çак кунсенче 16 хуçалăх колхоза кĕнĕ.

Дм. Михайлăв.

Çавăрăнса пăхмаççĕ

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строительствин 2-мĕш участкинчи екскаватăр колоннинче ĕçлекенсем хушшинче куљтмассăлă ĕç çав тери йапăх. Кунта хĕрлĕ кĕтес пур пулин те хаçат-журналсем, шашкă-шахмăтсем çук. Массăлă ăнлантурлă ĕçе те туса пымаççĕ.

Йулашки вăхăтра столовăй, ларйок йапăх ĕçлеме пуçларĕç. Ларйока ирхине 9—10 сехетре çеç уçаççĕ, час-часах çăкăр илсе пымаççĕ.

В. Алендейĕв.

Сывалса çитнĕ бойецсемпе командирсем—Хасан кӳлли патĕнчи çапăçусен участникĕсем хăйсен чаçĕсене таврăнаççĕ. Хабаровск чаçĕсенчи начаљниксен арăмĕсем бойецсемпе командирсене пурне те хаклă парнесем панă.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: госпитăљ начаљникĕ Е. Б. Линский кĕçĕн командира П. Л. Йакăвлĕва парне тыттарать. (1938 ç. çентăберте ӳкернĕ).

Соколов фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Вулакана пулăшу

„Йапони милитарисĕсем провокацилĕ майсемпе вăрçă кăларма тăрăшаççĕ“

Икĕ çул ытла кайарах Сталин йулташ Америкă журналисĕпе Рой Говардпа калаçнă чухне тĕнчере вăрçă хăрушлăхĕн икĕ тĕп вучахĕ пурри çинчен генилĕ çивĕчлĕхпе кăтартса каланă. „Пĕрремĕш вучахĕ вăл Инçет-Хĕвелтухăçĕнче, Йапони таврашĕнче. Епĕ çакна Йапонин çар çыннисем ытти государствăсене йунаса темиçе хут та каланисене астуса калатăп. Иккĕмĕш вучахĕ Германи таврашĕнче“ (Сталин).

Йулашки çулсенчи событисем Сталин йулташ тĕлĕнмеле тĕрĕс те çивĕччĕн курса каланисене пĕтĕмĕшпех çирĕплетрĕç.

Нумайăх пулмасть пичетленсе тухнă Г. Болдырĕвăн «Йапони милитарисĕсем провокацилĕ майсемпе вăрçă кăларма тăрăшаççĕ» йатлă кĕнеки пурнăçри тĕрĕс фактсем çинчен калакан материалсемпе Инçет-Хĕвелтухăçĕнче вăрçă хăрушлăхĕн вучахĕ пуррине кăтартса парать.

Севет Çойузне хирĕç вăрçăпа тухасси Йапони империалисăмĕн йут çĕршывсен территорисене тытса илмели планĕсенче тахçанах тĕп вырăн йышăнса тăрать.

Йапони империалисĕсен Совет Сойузĕн территорисене тытса илмели планĕсем вĕсем Манчжурине тытса илнĕ вăхăтран вара уйрăмах пит уççăн курăна пуçларĕç.

Китайри вăрçă Йапонине калама çук пысăк йăварлăхсем кӳрет пулин те, иапони хăйĕн икĕ чи лайăх çарĕсене Манчжурире тата Корейăра, Совет Сойузĕн чиккисем тăрăх хăварать. Вăл çав çарсене унта Совет Сойузне хирĕç „пысăк вăрçăпа“ тухма кирлĕ тесе тытса тăрать. Вăл çарсен командирсен составĕ ытларах авантурисла тата реакцилĕ елементсенчен—„çамрăк офицерсем“ тенĕскерсенчен тăрать.

Квантун çарĕ тăхçантанпах ĕнтĕ провокацилĕ майсемпе Совет Сойузĕпе вăрçă пуçарса йама хăтланать. Манчжурине тытса илнĕ хыççăн Йапони военшчини ССРС чиккисем патĕнче провокацисем тăвассине вăйлатрĕ. 1938 çулти ииуљ уйăхĕнчен пуçласа Йапони военшчини Совет Сойузĕ тĕлĕшпе хăйĕн çĕнĕрен хатĕрленĕ, тĕлĕнмеле ирсĕр провокацисем тумали пысăк планне пурнăçа кĕртме тытăннă. Совет Сойузĕн Токио хулинчи полпредствине хирĕç киревсĕр ĕç туни, Советăн Уссури шывĕ çинчи утравне хĕçпăшаллă вăйпах йышăнма хăтланни, регуљарлă çарсемпе тата артиллерипе Заозернăйапа Безымйаннăйа высотасене тытса илме хăтланни—çаксем ĕнтĕ çав планăн уйрăм пайĕсем пулаççĕ те.

Анчах, провокаци тума Хасан кӳллинчен пуçласа, Йапони военшчини кунта ăна хыттăн аркатса тăкассине пачах шухăшламан. Хасан кӳлĕ районĕнче пирĕн Хĕрлĕ Çартан нихăçан манмала мар урок туйаннă хыççăн, хăйсен пултаруçăрлăхне пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартнă хыççăн Йапонин вăрçă чĕртсе йаракан çыннисем халђ ĕнтĕ йăлтах ăса кĕнĕ,—тесе шутлани йăнăш пулнă пулĕччĕ. Паллах, Йапони захватчикĕсен ĕмĕчĕсем тата вĕсен планĕсем 1938 çулти ииуљ уйăхĕнчи пекех пулса йулнă.

Йапони самурайĕсен Китайри вăрă-хурахла вăрçи çинчен тапратса, автăр Китайпа Йапонин хуçалăхĕ мĕнлине кăтартса паракан пысăк материал илсе кăтартать.

Китай халăхĕ ку хутра Йапони тапăннине политикă тĕлĕшĕнчен çирĕпленнипе çеç мар, вăл тата економикă тĕлĕшĕнчен те чылайах çирĕпленнипе кĕтсе илнĕ. Йапони пырса тапăначченхи пилĕк çул хушшинче Китайăн тырпулсем аван пулнă. Ку вăл Нанкин правительствине продовољствин пысăк запасĕсене хатĕрлеме май панă. Йалхуçалăхĕнчи лайăх условисем халăх хуçалăхĕн ытти отрăçлисенче палăрмасăр тăма пултарайман. Китайăн йут çĕршывсемпе сутуилӳ тăвасси те палăрмаллах ӳснĕ. Китай експăрчĕ 1936 çулта 1935 çултинчен 22 процент ытла шутланнă. 1936 çулти вăхăтпа танлаштарсанах та 1937 çулăн малтанхи çурçулĕнче Китайăн сутуилӳ тăвасси 35 процент чухлĕ ӳснĕ. Китайăн ытти государствăсемпе финанс тĕлĕшпе тăвакан расчот ĕçĕсем те лайăхланнă. Çак çулсенче Китай промышлĕннăçĕ те чылай малала кайнă. Китай çĕршывĕнче çĕнĕ промышлĕннăç предприйатисене чылай тунă: металлурги савăчĕсем, пир-авăр хапрăкĕсем, хут туса кăларакан хапрăксем, сахăр тăвакан, çу çапакан савăтсем тата ыт. те.

Йапони çарĕ хăй пырса кĕнĕ районсенче хуçалăха пĕтĕмпех çаратса пĕтерет пулин те, Китай економикă тĕлĕшĕнчен калама çук çирĕппĕн тăрать. Унăн хуçалăх центрĕсем халђхи вăхăтра йапонĕçсем йышăнман районсене—кăнтăр тата хĕвеланăç йенчи районсене пит хăвăрттăн куçса пыраççĕ. Китайăн фронтран айакри провинцийĕсенче ытти районсенчен куçарса илсе пынă тата çĕнĕрен организациленĕ хапрăксемпе савăтсен ĕçĕ вĕресе тăрать. Уйрăмăнах сутуилӳ ĕçĕ хăвăрттăн вăй илнĕ. Йут çĕршывсенчи пичет кăтартнă тăрăх, Китайăн йут çĕршывсемпе сутуилӳ тăвасси Йапони пырса тапăннă уйăхсенче хыттăн чакнă пулнă, анчах 1938 çул пуçламĕшĕнче вăл хăйĕн оборочĕпе каллех 1937 çулăн малтанхи çурçулĕнчи оборотна танлашнă.

Китайăн финанс тĕлĕшĕнчи условисем Йапонинчен чылайăх лайăх. Унăн вăрçă ĕçне кайакан расхутсем Йапони расхучĕсенчен 4 хут пĕчĕкрех. Йапони Китайри вăрçă валђи кашни уйăхрах 24 мĕлйун фунт стерлинга йахăн расхутлать, Китай 6 мĕлйун фунт стерлинга йахăн кăна расхутлать. Вăрçă пуçлансан пирвайхи çулне Китай правительстви Францирен, Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчен, Англирен, Чехословакирен, Швейцаринчен укçалă тата таварлă займсем чылай илнĕ пулнă. Çак вăл йут çĕршывсенчи биржăсенчи Китай кивçенлĕхĕпе унăн ваљутине малала çирĕплетсе пыма пулăшнă. Китай правительствин ваљутлă пысăк фонд пур. Вăл халђхи вăхăтра та, вăрçă пуçлансан пĕр çул иртнĕ хыççăн, хăйĕн унчченхи сумминчен, Китай долларĕпе хакласан,—1.200 мĕлйун доллар чухлĕ ытла шутланать.

Китай çарĕн организацинче те чылай утăмсем пулса иртнĕ. Китай çарĕн тĕп вăйĕ çакăнта пулать—Йапони захватчикĕсене хирĕç çапăçнă çĕрте вăл 400 мĕлйунлă пĕтĕм Китай халăхĕ çине тайанать.

Йапонин çак вăрçăра 400 пин çын ытла пĕтнĕ, 6 мĕлйард иена çити тăкак курнă.

Пачах урăхла курăнать вара Йапони империалисăмĕн економикă тата çар бази. Нумай çулсем хушши пыракан Китайри вăрçă, пуринчен ытла йулашки вăхăтра Йапони империалисĕсем Китай халăхĕпе çапăçни, Йапонин халăх хуçалăхне калама çук хыттăн хавшатнă. Хуçалăха йĕркелĕн аталантарса пыма Йапонин çĕр айĕнчипе çĕр çинчи запассем çителĕклĕ. Анчах колонилĕ пысăк импери тумашкăн, Йапонири финанс капиталĕ çавна тума ĕмĕтленет, Иапони вара промышлĕннăç аталанăвĕ тĕлĕшпе те, вăрçă хатĕрĕсем тăвакан шултăра промышлĕннăç валђи чĕр таварсем тупас тĕлĕшпе те чухăн. Чи кирлĕ чĕр таварсене унăн ытти çĕршывсенчен кӳрсе килме тивет. Кăна валђи укçа кирлĕ. Анчах вăрçăна пула укçасен запасĕсем хăвăрт пĕтсе пыни çав чĕр таварсене сутăн илессине ытларан та ытларах йăвăрлатса пыраççĕ. Вăрçăн ишĕлтерӳлĕ ĕçне халђхи вăхăтра Иапони халăх хуçалăхĕн пур отрăçлисем те туйаççĕ. Иапонин йалхуçалăхĕ хăй кăна вăрçă пуçланнă çулах 700 пин работникç йахăн çухатнă. вĕсене Китайа, преступленилĕ тата йут çĕршыв территорисене туртса илессишĕн пыракан вăрçа ăсатнă. Ку вăл Йапони йалхуçалăхне пит хыттăн пырса тивнĕ, мĕншĕн тесен унăн йалхуçалăхĕ пĕтĕмĕшпех алă ĕçĕ çинче тытăнса тăрать. „Халђхи вăхăтра йалсенче ĕçĕн тĕп пайĕ вата карчăксемпе хĕрачасем подросткăсем çине ӳкет“, — тесе çырать „Бунгей Сюндзю“ йатлă журнал. Вăрçă Йапони йалĕсĕнчи мĕнпур лашасенчен 25 процентне çатса йанă та ĕнтĕ. Иапони йалĕсем унсăрăн та лашасенчен пит чухăн пурăнаççĕ. 1937 çулта, унчченхи çулсенчипе танлаштарсан, рис — халăхсен тĕп çимĕçĕ—1,6 мĕлйун коку (1 коку—180 литр шутланать) чухлĕ кайа туса илнĕ. Йапони експăрчĕ кăçалхи çулти йанварĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ииулĕн 20-не çитиччен 20 процент чакнă, импăрт 34 процент чакнă. Иапони халăх хуçалăхĕн йăвăр пурнăçне тата йапаласен хакĕсем пĕрмайах хакланса пыни тата Йапони иенĕ йӳнелсе пыни тарăнлатса пырать.

(Йулашки 4-мĕш страницăра)

*)Г. Болдырĕв. „Йапони милитарисĕсем провокацилĕ майсемпе вăрçă кăларма тăрăшаççĕ“ Госполитиздат, 1938 ç. Тираж 500 пин екз.

Фашисла агреççине хирĕç

Америкăри общественносăн анлă сийĕсем Мÿнхенра Чехословакине пайласа уйăрасси çинчен тунă килĕшÿве хытă сивлеççĕ, вăл килĕшÿве туни Чехословаки интересĕсене сутни пулать, тесе калаççĕ. Çав килĕшÿ хыççăн америкăнецсем Германи фашисĕмне тата ытларах курайми пулнă. Йулашки вăхăтра пĕтĕм Америка тăрăх фашисăма хирĕçле пысăк демонстрацисем пулса иртеççĕ.

Октябрĕн 17-мĕшĕнче Чикагора, Германи фашисĕсен митингĕ пулнă çурт йĕритавра, никам организацилемесĕрех фашисăма хирĕçле пысăк демонстраци пуçланса кайнă, вăл демонстрацире 4 пин çын ытла пулнă.

Йулашки вăхăтра Америкăри ытти хуласенче те фашисăма хирĕçле нумай пин çынлă демонстрацисем пулса иртнĕ. Америкă общественносĕ Мÿнхенри килĕшÿ пирки мĕн калани çинчен Франции хаçатсем уйрăмах нумай çыраççĕ. „Тан" йатлă реакцилĕ хаçатăн та халĕхи вăхăтра ирĕксĕрех: фашисла Германи умĕнче çапла кайала чакни Америкăра таран тăрăху камăлĕ çĕклесе йачĕ, тесе çырма тивет.

Чехословакине гитлĕрла Германи аллинĕ—пĕчĕк нацисене, асăлăхпа искусствăн пĕтĕм тĕнчешĕн паллă çынисене варвăрла хĕсĕрлекен, террорла режимла фашисла Германи аллине парасса пани Америкăра манма пултараймаççĕ,— тесе çырать „Тан".

Мÿнхенра тунă киревсĕр çĕс хирĕçле протест пĕтĕм тĕнчипех вайланса пырать.

Франции компарти оргăнĕ „Юманите" çапла пĕлтерет: октябрĕн 18-мĕшпе 23-мĕш хушшинче компарти Мÿнхенри килĕшÿве хирĕç протест туса тата республикăлă Испание хÿтĕлес шутпа пĕтĕм Франци тăрăх пысăк митингсем организацилет.

Австралири пичет: центр Йеврори йулашки вăхăтра пулса пыракан событисем Австралире Çĕнĕ Зеландишĕн „Берлин—Рим—Токио тĕнелĕ йенчен килекен хăрушлăха вайлатаççĕ, тесе паллă тăвать. Тĕрлĕ хаçатсем: Йапони агреççине пула Британи империн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи позицийĕсем йăвашланса пыраççĕ, тесе çыраççĕ.

(ТАСС).

Испанири троцкисла-фашисла бандă ĕçĕ пирки пыракан процес

ПОУМ текен троцкисла-фашисла шпионла бандă ĕçĕ пирки пыракан суд ларăвĕнче октябрĕн 19-мĕшĕнче айăпласа çырнă акт çумне хушса хунă документсене вуласа панă. Вăл документсем хушшинче çаксем пур: Германири фашисла партин член кĕнекисем (вĕсем троцкис-поумăвĕçсен пулнă), поумăвĕçсем Испанири художествăлă хакла йапаласене варларла сутса пĕтерни çинчен калакан документсем, вĕсем Парижра суйа укçа-тенкĕ туйанни çинчен, йут çĕршывсенче хĕçпăшалсем туйанса вĕсене республикăлла Испани тылне вăрттăн илсе пыни çинчен калакан документсем т. ыт. те.

Çавăн пекех тата ПОУМ пуçлăхĕсен „ларăвĕсен" протоколĕсене, поумăвĕçсем 1938 çулти май уйăхĕнче республикăна хирĕç восстани тума хатĕрленес йатпа тунă „ларусен", республикăн вăрçă хатĕрсем тăвакан промышленносĕ çинчен, республикă çарĕсем мĕнле вырнаçса тăни çинчен шпионла сведенисем тупас ытла пулнă „ларусен" протоколĕсене вуласа панă.

Унтан Барселонăра тата Мадридра полици допрос туни протоколĕсене вуласа панă. Вăл протоколсем çакна кăтартса параççĕ: арĕсленĕ поумăвĕçсенчен нумайăшĕ Германири фашисен вăрттăн полицин укçалла ĕçлекен агенчĕсем пулнă. ПОУМ текен троцкисла организаци пĕтĕмĕшпех Франко генерала тата фашисла государствăсене усă кÿрес шутпа шпионла ĕçсем туса пурăннă.

(ТАСС).

Йутçĕршывсен доброволецĕсене республикă çарĕнчен кайала чĕнсе илеççĕ

Барселонăра Лигă нацин пĕтĕм тĕнчери комиççийĕпе Испани правитĕлствин комиççийĕ хушшинче пулса иртекен калаçура интернационалла бригадăри, хайсен çĕршывĕсене каймасăр тăракан, доброволецсен малашлăхне татса парасси тĕп ыйту пулса тăнă.

Республикăлла Испани правитĕлстви пĕтĕм тĕнчери комиççи умне çакăн пек пĕртен пĕр условисем кăларса тăратнă: хайсен çĕршывĕсене кайма хăраса тăракан Италипе нимĕç доброволецсене вăлуăн хăрушăсăрлăх туса памала. Çавăн пекех, Испани правитĕлстви çав доброволецсене, вĕсене фашисăма хирĕçле ĕçĕсемшĕн йĕрлесе вĕсене хĕстермен çĕршывсене асăтма кирлĕ укçа-тенкĕ тупса пама ыйтнă. Пĕтĕм тĕнчери комиççи çак ыйтăва пăхса тухма хатĕрленет.

(ТАСС).

„Йапони милитарисĕсем провокацилĕ майсемпе вăрçă кăларма тăрăшаççĕ"

(ЙУЛАШКИ).

Йапонире пĕтĕм халăх тупăшĕ 1938 çулта 15—16 мĕлйард иенран ытла пулаймасть. Вăл тупăшăн çурринe преступленилĕ вăрă-хурахла вăрçă вăлуăн государства хайĕн расхучĕсене çумне пĕрлештерет.

Государствăн тĕлĕмнеле пысăк расхучĕсене вăрçă ĕçне тата вăрçă ĕçне мар кайакан расхутсене Йапони тĕрлĕ займсемпе, налогсемпе тата инфлаци тунипе витме тăрăшать. Кăçалхи укçа-тенкĕ çулĕ пĕтнĕ тĕле Йапонири государствăн тата вырăнти (самоуправлени) власçсен займсем тĕлĕшĕнчи парăм 25 мĕлйард иен йĕ çĕршыври пурăнакан кашни чун пуçне 338 иен шутланать. Çакăнпа пĕрлех налог хушрасене вайлатса пыраççĕ.

Йапони ылттăн запасĕ 1929 çулта 1.072 мĕлйун иен пулнă, халĕхи вăхăтра 320 мĕлйун иен шутланать.

Йапони пичечĕ пĕчĕклетсе кăтартать пулин те, éçсĕр тăрса йулнисем йулашки çулта Йапоние иккĕ çурă хут нумайланнă. Йапони правитĕлстви 1938 çулти ийун уйăхĕнче сутăн илнĕ йапаласемпе уçа куравсене чакарасси çинчен, ку шутра 32 йышши тĕрлĕ таварсем туса каларассие чакарасси çинчен те, постановлени кăларнă. Çав постановлени çывăх вăхăтри результăчĕсене каласа, „Югай" хаçат çакăн пек вывăд тăвать: унпек туни тата 1.300 пин çынна éçсĕр тăратса хăварасси патне илсе пырать, вĕсен çемйисемпе пĕрле вăра нимсĕр тăрса йулнисем 4 мĕлйун çынна çитнĕ пулĕ.

Йапони экономикине йăлтах вăрçă éçне пăхăнтарнă. „Пур капиталисăмла çĕршывсене те çаварса илнĕ милитарисăм тĕнчи хушшинче Йапони чăн-чăн çар лагерĕ пек куранса тăрать", тесе çырать Г. Болдырĕв. Йапони халăх хуçалăхне вăрçă éçĕсен çулĕ çине тăратнипе пуринчен те ытла 1938 çулти мартăн 24-мĕшĕнче „пĕтĕм çĕршывĕн мобилизаци тăвасси çинчен" йышăннă саккун кăтартса пырать. Вăл саккун Йапонири пĕтĕм власа Йапони бÿрократийĕпе вóйенщинăн аллине панă.

Çаксем, вĕсем пурте Йапони çĕршывĕнче класлă хирĕçÿсене çивĕчлетсе йанă. Полицейскисем калама çук хыттăн террор туса пынине пăхмасăрах хулара éç тĕлĕшпе конфликтсем тата хресченсемпе помещиксем хушшинчи конфликтсем çулсеренех нумайланса пыраççĕ. Éç тĕлĕшĕнчи конфликтсемпе тата вăл конфликтсене хутшăннисен хисепĕпе 1937 çул йулашки пилĕк çул хушшинче рекордлă çул пулса тăрать.

Хулара çаван пек конфликтсем тата хресченсемпе помещиксен хушшинче пулакан конфликтсем ÿссе пынине цифрăсемпе çутатса парса, автăр çапла çырать. „Çаксене пурне те пĕрле илсен, вĕсем ак мĕн çинчен калаççĕ: Йапони империалисăмĕн тылĕ фронтăн чан хачтанле тĕреке тесе калама çук, Йапони éççыннисен вăрçа хирĕçле пухăмĕ ÿссе пыни, майĕ, Йапони çарĕн, вăрçă éçĕсем ытларах та ытларах ăнса пынимĕн, çак факттăрах вăл Йапони вăрçăлă-фашисла çыннисем Китайра пуçласа йанă йунлă авантури арканса кайас éçре тĕп вырăн йышăнса тăрать".

* *
*

Г. Болдырĕвăн кĕнекине Совет пичечĕ пысăк интересла вулать. Вăл кĕнекере пит те нумай та интерессăн материал тĕпчисе ...

Шкул çулне çитнĕ ачасене тата подросткăсене пурне те пуçламĕш вĕрентÿпе çавăрса илесси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çакна палла тăвать: шкул çулне çитнĕ ачасемпе подросткăсене пурне те пуçламĕш вĕрентÿпе çавăрса илес тĕлĕшпе Çутĕç халăх комиссариачĕ тата халăха вĕрентес ĕçĕн район пайĕсем пачах çителĕксĕр ĕçлеççĕ, çакна пула чылай сулсем хушши çитнĕ шкул çулне çитнĕ нумай ачасемпе подросткăсем пуçламĕш вĕрентÿ тулашĕнче тăрса йулнă.

Халăха вĕрентес ĕç оргăнĕсен работникĕсене час-часах улăштарса тăни (ку енчен Çутĕç халăх комиссар пулнă Осипăв тÿрремĕн ирĕк панипе çапла пулнă), халăха вĕрентес ĕç оргăнĕсенчи государствă дисциплинине йăвашланасси патне илсе пынă. Çакна май çитнĕ нумай районсенче пĕтĕмĕшле пуçламĕш вĕрентÿпе çавăрса илмелли ачасене учета илессине начар туса иртернĕ. Сăтăрлă практикă — пуçламĕш шкулсен пĕрремĕш класне вĕренме сул сиктерсе илесси хаð те пур-ха: 1938 çулта Ишлей районĕнчи пуçламĕш шкулсенче 9 шкулта 1-мĕш классене вĕренме илмен, Трак районĕнче—10 шкулта, Елĕк районĕнче—9 шкулта, Шупашкар районĕнче 6 шкулта 1-мĕш классене вĕренме илмен.

Халăха вĕрентес ĕç оргăнĕсен тата райĕçтăвкомсен ĕçĕсем çакăн пек пулнине пула шкул çулне çитнĕ ачасемпе подросткăсене пуçламĕш вĕрентÿпе çавăрса илесси 1938 çулти планĕ тулман. Кăçалхи октябрĕн 1-мĕш тĕлне республикă тăрăх йышăннă планрине таншлатарсан, I—IV-мĕш классене илмесĕр 3.500 çын тăрса йулнă. Турхан районĕнче, планра кăтартнине таншлатарсан, 340 çын вĕренÿ тулашĕнче йулнă. Патăрьел районĕнче—400 çын, Тутаркас районĕнче — 307 çын, Куславкка районĕнче—249 çын, Елĕк районĕнче—180 çын

ЧĂВАШ АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ÇАПЛА ЙЫШĂНАТ:

1. Райĕçтăвкомсене тата халăха вĕрентес ĕçĕн районсенчи пайĕсене çакна тума хушас: районсенчи хаса пурăнакан пур пунктсенче те вĕренĕве йăвăçтарман пур сене—8 çултан пуçласа 11 çула çитнĕ ачасене, 16 çултан иртмен подросткăсене тĕрĕслесе тухас пулать, ку ĕçе тума йышлă общественносăна йăвăçтарас пулать, çапла майпа кăçалхи октябрĕн 25-мĕш тĕлне вĕренĕве йăвăçтарнă пур ачасене те шкула çÿремеле тăвас пулать.

2. Райĕçтăвкомсене çакна тума хушас: октябрĕн 20-мĕшĕнчен кайа йулмасăр райĕçтăвкомсен анлă пленумĕсене пухса, унта йалсоветсемпе колхозсен председателĕсене, шкулсен директорĕсемпе заведующийĕсене йăвăçтарас пулать, вăл пленумсенче шкул çулне çитнĕ ачасемпе подросткăсене пурне те пуçламĕш вĕрентÿпе çавăрса илес тĕлĕшпе тумалли практикăлла ĕçсене сÿтсе-йавас пулать.

3. Çанталăк пăсăк кунсемпе сивĕ кунсенче ачасене шкула лавпа леçсе хăвараççине организацилесе тата тумтир, урана тăхăнмалли çуккипе аптăракан ачасене материаллă пулăшу парас тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçсем тума йалсоветсемпе колхозсен председателĕсене хушас.

4. Суту-илÿ халăх комиссариатне тата Чăвашсоюза ачасем валли тумтир тата урана тăхăнмалисем ытларах кÿрсе тăма хушас.

5. Аласталăх коопераци ертелĕсене çакна тума хушас: пулăшу кирлĕ ачасене пулăшу пама йатарласах уйăрса хунă фондсемпе çав ĕçе кăна усă курас пулать.

6. Чăваш АССР Çутĕç халăх комиссариатне, Суту-илÿ халăх комиссариатне тата халăха вĕрентес ĕçĕн районсенчи пайĕсене çакна тума хушас: хуласенчи пур шкулсенче те шкулти буфетсем организацилес пулать, йалсенчи шкулсене вĕренекенсене вĕри чей парса тăмала тăвас пулать.

7. Райĕçтăвкомсемпе йалсоветсен председательĕсене: нойабрĕн 1-мĕш тĕлне шкул çурчĕсене хĕлле валли йăлтах хатĕрлесе çитерме, шкул çурчĕсене йусас ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме, шкулсене ăшăтма, шкулсен ачасем валли вут-шанкă çителĕклĕ хатĕрлеме хушас.

8. Райĕçтăвкомсене çаксене тума хушас: обязательнăй йĕркепех пурне те пуçламĕш шкулта вĕрентмелли плана мĕнле тултарни çинчен райĕçтăвком президиумĕсемпе пленумĕсенче шкулсен директорĕсемпе заведующийĕсен, йалсоветсен председательĕсен, йалсоветсен кулдтсекцийĕсен руководителĕсен отчочĕсене тăтăшăнах итлес пулать, палăртнă çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пырас пулать.

9. Йалсенчи пур вăтам шкулсене те вĕренекенсем валли интернатсем пулни кирлĕ тесе шутлас. 1939 çул бÿджетне тунă чухне интернатсем тума кирлĕ пулакан расхутсене шута илме Çутĕç халăх комиссариатне хушас.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ А. СОМАВ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕшĕн В. ЛЕБЕДĔВ.

Шупашкар хули.
1938 ç., октябрĕн 15-мĕш.

Ашшĕ-амăшĕсем тăрăшаççĕ

Çак кунсенче Лобачовкă шкулĕнче (Парачкав районĕ) вĕренекен ача ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухăва мĕнпур вĕренекен ача ашшĕ-амăшĕсенчен 80 процент пуçтарăнчĕç. Пухăва пуçламĕш шкул заведующийĕн Ножкин йулташăн вĕренÿпе воспитани éçĕ çинчен тата шкул хуçалăхĕ çинчен тунă докладне пысăк тимлĕхпе итлерĕç. Шкул, Октябрĕ революцин 21 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленсе пынă май, вĕренÿпе воспитани éçне тивĕçлĕ вырăна хăпартма, вĕренÿ çулĕн 1-мĕш чĕрĕкне лайăх кăтартусемпе вĕçлеме сăмах панă. Вĕренекен ача ашшĕ-амăшĕсем хайсен йенченех, ачасем валлăн кирлĕ урокселене хатĕрленме кирлĕ условисем туса парса, ачасем хушшинче пĕлÿлĕхе хăпартма, тасалăхшăн, тирпейлĕхшĕн тата дисциплинăшăн кĕрешес тĕлĕшпе шкула мĕн май пур таран пулăшса пыма хайсем çине обязательствăсем илчĕç. Ку шкулта пурте Парачкаври пуçламĕш шкулта вĕренекен ача ашшĕамăшĕсене социалисăмла ăмăртăва чĕнчĕç.

Октябрĕн 13-мĕшĕнче манăн районри çутĕç пайĕ хушса йанипе райĕçтăвкомăн çумĕнчи ача сатĕнчи ача ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕнче пулма тĕл килчĕ. Кунта ача садĕн заведующийĕ Борисăвă йулташ хайĕн éçĕсем çинчен доклад туса пачĕ. Пуху активлă та пысăк çĕкленÿпе иртрĕ. Ача ашшĕамăшĕсем туха-туха калаçса питĕ паха кăтартусем парса хăварчĕç. Кунта еп тухса ача садĕн éçĕнчи лайăх йенĕсемпе çитменлĕхсене кăтартса, малашне çитменлĕхсене пĕтерме кирли çинчен каларăм.

Ача ашшĕ-амăшĕсем Октябрь уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса „Передовик" колхозĕн ача сатĕнчи ача ашшĕ-амăшĕсемпе ăмăртас тесе йышăнса хăварчĕç.

П. И. Новикăвă.
Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ.

Çавăрăнкалайманлăх

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строительствин управленинче ĕçлекенсем строительствăн ĕçĕ йапăх пынине йаланах ĕç вайĕ çителĕксĕрри çине йăвантараççĕ. Ку тĕрĕс мар. План тулса пымани руководительсенчен те чылай килет. Вĕсем рабочисен ĕç вăхăтне тĕрĕс организацилес, ĕç вайĕне туллин усă курас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ.

Октябрĕн 9-мĕшĕнче „Балтиец" колхозран (Çĕрпÿ р.) 7 çын ĕçлеме пынă. Анчах 42-мĕш километра вĕсене икĕ кун хушши ĕç памасăр кĕттерсе тăратнă. Çакăн пекех Тупкер, Кăкар, Малиновкă йалĕсенчен пынă çынсем вăхăтра ĕç туса паман пирки пурте кайала таврăннă.

Пирĕн „Балтиец" колхоз кăçалхи çул чукунçул строительствинче лайăх ĕçлесе пычĕ. Çентăбĕр уйăхĕнче пулса иртнĕ стахановла çирĕмкунлăхра та колхоз ыттисенчен малта пычĕ. Колхозниксем строительствăра тăрăшсах ĕçлеççĕ. Анчах руководительсен кирлĕ пек ĕç тупса памани вĕсене татах та хастарлăн ĕçлессине чакарать. Хăшпĕр чухне тата материалсем те çитмеççĕ. Десятник Архипăв материалсем ыйтсан „хусамăр тупăр" тесе çеç ответлет. Малашне те çапла ĕçлесе пырсан, ĕç пысăк хăвăртлăхпа пырасси çинчен шанма йăвăр.

И. Михайлăв.

Суту-илÿ ĕçне йĕркелемен

Епĕр Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строительствинче 10-мĕш километра ĕçлетпĕр. Кунта ĕçлекенсем кашнийех чукунçулра туса пĕтересшĕн хытă тăрăшаççĕ. Çентăбĕр уйăхĕнче пулса иртнĕ стахановла çирĕмкунлăхра вĕсем хăйăр сарас ĕçе сукчен туса пĕтерчĕç.

Анчах хăшпĕр çитменлĕхсем пурри пирĕн ĕçре чылай чăрмав кÿрет. Пирĕн патра суту-илÿ тăвас ĕçе йĕркелемен. Ытти участоксемпе околоксенчи рабочисем нумайăх та пулмаст 10—15-шар метр мануфактура илчĕç. Анчах епĕр илеймерĕмĕр. Пирĕн пата çирĕплетнĕ Кÿкеç йалĕпе ку тĕлĕшпе нимĕн те тумаст.

Александрăв.

МОПР обкомĕпе хула комитечĕн президиум ларăвĕнчен

Октябрĕн 15-мĕшĕнче МОПР обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн пĕрлехи ларăвĕ пулса иртрĕ. Ларура МОПР активĕ пулчĕ. МОПР ĕçĕнчи активиссем МОПР хула комитечĕн тата обкомăн ĕçĕсене хытă критиклерĕç. МОПР обкомĕпе МОПР организацийĕсенче отчот-па суйлав кампани сÿрĕкĕсене пăсни, финплана йапăх тултарса пыни, 9 уйăх хушшинче те кăçалхи финплан 36 процент çеç пурнăçа кĕнĕ.

Йалхуçалăх институчĕ çумĕнчи МОПР йачейкин секретарĕ Тимофейĕв йулташ МОПР хула комитечĕн, уйрăмах унăн секретарĕн Журавлĕвăн ĕçĕсене вайлăн тиркерĕ.

— Журавлĕв хулари организацисене пĕринче те пулман, хула комитечĕн ларăвне йаланах ÿсĕр пынă,—тет Тимофейĕв йулташ.

Йалхуçалăхĕн Коммунисла аслă шкулĕ çумĕнчи МОПР йачейкисенчен ытти пек ĕçлекен йачейкисенчен пĕри пулса тăрать.

Студентсем, преподавательсем пурте МОПР организацинче тăраççĕ. Çултапăкри финанс планне тултарнă. МОПР йенĕпе ĕçлеме штатра тăман инструктăрсем вĕрентсе кăларнă. Анчах çак ĕçсенче МОПР хула комитечĕ тата МОПР обкомĕ нимĕн те пулăшни пулман. Çулталăк хушшинче пирĕн патра МОПР обкомĕн представителĕ мĕн пурĕ те пĕр хут кăна пынă,—тет йалхуçалăх коммунисла аслă шкулĕнчи МОПР йачейкин секретарĕ.

Ларура уйрăмăнах МОПР обкомĕн ответлă секретарĕ Финогенăв çинчен сÿтсе-йавреç. Вăл тăтăшах ĕçсе çÿренĕ. МОПР обкомĕн ĕçне йухантарнă.

Çакăншăн Финогенăва ĕçрен хăтарчĕç. Çак кунсенчех ПСК(б)П хула комитетĕнче унăн партийлĕхĕ çинчен сÿтсе-йаваççĕ. МОПР обкомĕн ответлă секретарĕ пулса ĕçлеме Еделăманйулташа суйларĕç.

Лукинский.

Филармони çĕнĕ çезонра

Октябрĕн 27-мĕшĕнче Чăваш çĕн государствăлă филармонийĕ комсомол 20 çул тултарнă йатпа Академи театрĕн çуртĕнче 1938—39 çулти çĕнĕ çезона уçать.

Çезона уçнă концерт программинче çаксем пулаççĕ:

Доховой оркестр — Бетховенăн „Экмондне", Глазуновăн Испанский танецне („Раймонд" балетран), Глиэрăн матроссикий танецне („Красный мак" балетран), Дунаевскин маршне („Цирк" кинофильмран), Вердин маршне („Аида" оперăран) выçать.

Хор—Хачатурйанăн „Песня о Сталине", Лебедĕвăн „Сталин çинчен хывнă йура" (чăвашла), Римский-Корсаковăн „Татарский полон", Листăн „Прометей", Лисковăн „Çамрăк лотчиксем", „Аслă шыв хĕррисем" (чăвашла), Покрасăн „Если завтра война" т. ыт. йурасене те йурлать.

Концертра кунсăр пуçне солиссем тухса йурлаççĕ, квартет, трио тата дует пулать.

Çанталăк

Йулашки кунсенче йурлă, çăмăрлă нÿрĕ çанталăк тăрать. Октябрĕн 18-мĕшĕнче сывлăшри вăтам температура 0,8 градус ăшă, чи çÿлĕ температура 2,4 градус ăшă, чи пĕчĕк температура 0,8 градус сивĕ пулнă.

Йур-çăмăр 0,6 миллиметр хулăмĕш çунă. Октябрĕн 19-мĕшĕнче сывлăшри вăтам температура 4,9 градус ăшă, чи çÿлĕ температура 9,5 градус ăшă, чи пĕчĕк температура 0,3 градус ăшă пулнă.

Çăмăр 0,6 миллиметр хулăмĕш çунă.

Пулни-иртнисем

Шупашкар пристанĕнчи грузчиксем — И. Н. Муравйов тата И. М. Бухгакăв Чебоксăн Атăл хĕрринчи ларйокĕнче ĕçлекен П. Леонтйĕв хватерне кăçхине кĕрсе 1435 тенкĕ государства укçине варланă.

Милици управленинчи работниксем вĕсене çав кăçах тытнă. Темиçе сехет хушшинчех вĕсем 400 тенкĕ таран расхутлама та ĕлкĕрнĕ. Муравйовпа Бухгакăва арĕсленĕ.

СУД

Кутăн йединоличник

Ухман йалĕнчи (Шăхасан р.) йединоличник Корнил Леонтйĕв государства умĕнчи обязательствăсене йурийех пурнăçа кĕртмесĕр тăнă: çулйĕр строительствинче ĕçлемен, вăрман касма кайман, агроправилăсене пăхăнман, лаша налогне йышăнмасăр, манăн лаша ĕçлемест, тесе пĕлтерĕве кайала тавăрса панă.

Шăхасан районĕнчи халăх сучĕ çак ĕçе пăхса тухса К. Леонтйĕва çакăн пек хăтланнăшăн 6 уйăх хушши ирĕксĕр ĕçлеттермеле турĕ.

Ив. Федотăв.

Чиркÿрен шкул тунă

Йуманай йалĕнче (Çĕмĕрле р.) йалсоветне кĕрекен халăхсем тăрăшнипе чиркÿ пулнă çуртран икĕ хутлă шкул туса лартрĕç. Çитес кунсенче унта вĕренме пуçлаççĕ.

Йуманай йалсоветне кĕрекен йалсенчи éççыннисен çитес вĕренÿ çулĕнче кунта вăтам шкул уçса пама районри çутĕç пайĕ умне ыйту лартнă. Г. Давыдăв.

Парти вĕрентĕвĕн çуртĕнче

Пайан

Пайан, октябрĕн 21-мĕшĕнче парти вĕрентĕвĕн çуртĕнче хулари агитаторсем валлăн „1939 çулти Пĕтĕм Союзри халăх переписĕ" темăпа инструктивлă доклад пулать.

Парторгсемпе парткомсен агитаторсене йăрас пулать.

Доклад кăçхине 7 сехетре пуçланать.

Ыран

Ыран, октябрĕн 22-мĕшĕнче, парти вĕрентĕвĕн çуртĕнче врачсемпе государствăн учрежденисенчи работниксен союзĕн инженер-ла-техникла работникĕсем валлăн В. И. Ленинăн „Развитие капитализма в России" éçĕ çинчен лекци пулать.

Лекци кăçхине 8 сехетре пуçланать.

Парти вĕрентĕвĕн çуртĕ. ПСК(б)П хула комитечĕ.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти октябрĕн 6-мĕшĕнче йышăннă постановленин тăрăх, ЧАССР Йустици Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи судебнăй экспертизăн бÿрови хупăнать.

Суд следстви оргăнĕсенчен тата арбитражран экспертиза тума ыйтусене йышăнма кăçалхи октябрĕн 19-мĕшĕнчен пăрахăç тунă.

Експертиза тума тытăннă ĕçсене туса çитересси вĕсене хушнă оргăнсене параççĕ, вĕсем вара расхут тăваççĕ. Бухгалтери экспертизин бÿровĕ çинчен пур претензисене кăçалхи октябрĕн 29-мĕшĕ йышăнаççĕ.

Шупашкар хула Совечĕн финанс пайĕпе финанс секцийĕ 1938 çулти октябрĕн 23-мĕшĕнче 7 сехетре кăçхине, Колхозник çуртĕнче Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармеецсен депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн финанс секцин аслă пленумне пухаççĕ.

КУН ЙĔРКИ:

1. III-мĕш квартăлти финанс планне пурнăçа кĕртни çинчен тата кăçалхи IV-мĕш квартăлăн задачисем.

Финанс секци членĕсен, хулари финанс активĕн, урамсенчи комитетсен членĕсен, комсодсен, отделсен инспекторĕсен, финконтроль постисен, предприйатисемпе учрежденисен руководителĕсен бухгалтерĕсен пымала.

Хула Совечĕн финанс пайĕ, финанс секцийĕ.

Аптекоуправленин КАНАШРИ АПТЕКĂ СКЛАДНЕ йалан ĕçлеме секретар-машинисткă, калькулатăр-счетоводсем, ĕçре пулăшакан работниксемпе работницăсем (фасовщиксем) КИРЛĔ

Ĕç çинчен çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Канаш, Базарная площадь, телефон—66

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Племзаготконтурине йалан ĕçлеме АСЛĂ БУХГАЛТĔР кирлĕ.

Ĕç укçи килĕшÿ тăрăх. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, № 7, Чувашплемзаготконтора НКЗ ЧАССР. Телефон № 7—71.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКĂНЧИ СЫХАНУ УПРАВЛЕНИЕ РАДИОТЕХНИКСЕМ, НАДСМОТРЩИКСЕМ, РАДИСТСЕМ, МОТОРИСТСЕМ тата опытлă машинисткăсем васналлă кирлĕ.

„ЧĂВАШ КОММУНĔ" СЫРĂНСА ИЛМЕЛЛИ ХАКСЕМ ПĔР УЙĂХА 2 Т. 50 ПУС. 3 УЙĂХА 7 Т. 50 П., 6 УЙĂХА 15 Т. СУЛТАЛĂКА 30 ТЕНКĔ. ПОДПИСКĂНА СЫХАНУ УПРАМĔСЕМ, ПИСМОНОСЕЦСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Уполномоченный Чувашглавлита д 545

Гор. Чебоксары, типография № 1 Мест пром ЧАССР, заказ № 793.ф. 6. 68 X 84 п. в.

02